Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 22 КĔÇНЕРНИКУН 219 (5032) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6-67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннепе хĕллехи ĕçĕсене йăнăçлăн иртерессишĕн

Вăрман хатĕрлев организацисем III мĕш квартал планне касса хатĕрлес йенĕпе сроксен тултарчĕç пулсан та, çентаберĕн 15-мĕшне 9 уйăхри плана 66,6 процент кăна тултарнă. Вăрман турттарса кăларас ĕçсем çакăнтан та начартарах тăрăççĕ: III мĕш квартал планне 58,5 процент, 9 уйăхри плана пурĕ те 59,4 процент çеç тултарнă. Автотракторсен паркĕ хăйĕн планне аран-аран çурри таран тултарса пырат. III мĕш квартал планне вăрман турттарса кăларас йенĕпе Акшкăль вăрманпункчĕ кăна тултарнă.

Уйрăмăнах ĕçсем 1938—39 çулсенчи вăрман хатĕрлевне хатĕрленес йенĕпе начар пыраççĕ. Ĕç вăйĕ пухма колхозсемпе, колхозниксемпе тата йединоличниксемпе договорсем тума тытăнманпа пĕрех. Вăрманта ĕçлеме пĕтĕмпе çуранниссем 4284 çын, лашапа ĕçлекенсем 4204 çын кирлĕ пулсан, çентаберĕн 15-мĕшне Акшкăль вăрманпункчĕпе Шамăршă вăрманпромхозĕ çеç договорсем тума тытăннă 1938—39 çулсенче ĕçлеме кирлĕ ĕç вăйĕ хисепĕнчен пурĕ те 3 процент çеç договорсем тунă. Вăрманта йалан ĕçлекен рабочисем, çавăн пекех маçтăрсем, бракерсем, приемщиксем çителĕксĕр. Вăрманта ĕçлекенсем валли пурăнмали çуртсем, общежитисем, бараксем тăвасси тата пур пеккисене йусасси начар пырат. Çак ĕçсене тума уйăрнă 344,4 пин тенкĕрен пурĕ те 106,7 пин тенкĕ кăна усă курнă. Ĕç хатĕрĕсене те çаплах кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе çитермен. Çăмахран, кроскот пăчкăсене, чутламали пуртăсене кирлĕ хисепрен çурри таран кăна хатĕрленĕ.

Çаксем пурте вĕсем вăрман хатĕрлев организацисен руководителĕсемпе парти организацисем çаплах вăрман хатĕрлев ĕçне тивĕçлипе тытăнманни çинчен, тăшмансемпе тата вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме большевикла кĕрешсе пыманни çинчен калаççĕ. Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем вăрманпромхозсемпе вăрманпункчĕсене куллен-кун йертсе пырас, вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрас вырăнне, халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕçрен пăранса кайнă. Парти райкомĕсем вăрманпромхозсемпе вăрманпункчĕсенчи коммуниссемпе комсомолецсене политикăлă воспитани парас ĕçре пуçламĕш парторганизацисене начар пулăшаççĕ. Весем вăрман организацисенчен фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуала-националисла агенчĕсен тата сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлессине хăйсен алăнне илмен.

Халăх тăшманĕсен, сăтăрçăсен тĕп йăвисене çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, вăрман организацисенче пытанса йулнă тăшмансемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсене пĕтерсе пыма вăхăт çителĕкле пулнă. Анчах вăрман хатĕрлев организацисенчи руководителсем çакна туман, сăтăрла ĕçсем мĕн йулашки вăхăтсене çитиччен пулса пынă. Пожедаев йултăш та тăшмансемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсене пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçсем тума большевикла тытăнман. Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçсем начар пынине вăл çаплах, тăшманла кивĕ руководствă хыççăн кайса, ĕç вăйĕ çитменни çине йăвантарма пăрахман. Вăрман организацисем ĕç вăйĕ организацилемесĕр, колхозсемпе, колхозниксемпе, йединоличниксемпе договорсем тумасăр хăй тĕллĕн пырса туласса шанса лараççĕ. Весем çак договорсене вăрман работникĕсем мар, парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем туса парасса кĕтеççĕ. Вăрман работникĕсем ĕççыннисем çинчен вĕсем вăрмана тухассинчен пăрăнса йулассăн тесе елек сарнипе, хăйсем начар ĕçленине вигсе хума пăхаççĕ. Çакнашкал çĕрĕк шухăша вăрман работникĕсен пуçĕнчен татăклăнах пĕтерсе колхозсемпе колхозниксем, йединоличниксем хушшинче çине тарса ĕçлеме тытăнас пулат.

Чăвашвăрманпромăн иртнĕ 8 уйăх хушшинче государствă умĕнче кĕнĕ парăма сывăх вăхăтра пĕтермеле. Хатĕрленĕ вăрмана турттарса кăларасси çине уйрăмах хытă пăхмала. Вăрман турттарса кăларас йенĕпе кварталтан кварталă йулса пырас йеркене йаланлăхах пĕтермеле.

1938—39 çулсенчи вăрман хатĕрлевĕн йăнăçлăхне IV-мĕш кварталă кĕреччен йулнă вăхăтпа туллин усă курса, кĕркуннехипе хĕллехи ĕçсене тĕплĕн хатĕрленни татса парат. Кунта уйрăмах вăрманта йалан ĕçлекен рабочисен кадрĕсене пухса çитересси, вăрманта ĕçлеме колхозсемпе йалсенчен ĕç вăйĕ пухасси, рабочисем валли пурăнмали çуртсем хатĕрлесси, ĕçхатĕрĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе хурасси, автотрактор паркне йусаса çитересси çине хытă пăхмала. Вăрманта ĕçлекен рабочисен пурнăçне лайăхлатасси, вĕсем хушшинче политикăлă, культмассăлă ĕçсене вăйлатса пырасси—вăрман ĕçĕнчи партипе хуçалăх, профсойуз организацисен тĕп ĕçĕ пулат.

Вăрман хатĕрлев планне тултарас ĕçре вăрмавпункчĕсем, участкăсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Çавăнпа Чăвашвăрманпром руководителĕсен пуринчен малтан вăрманпункчĕсене, участкăсене çирĕплетесси çине пăхмала. Пĕтĕм вăйсем, механизмсем тата материаллă пурлăхсем вăрманпункчĕсенче, участкăсенче пулмала. Производствă участкисене çирĕп, хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн пĕлекен, йертсе пыма пултаракан кадрсем памала. Йертсе пырасси вăл — кубометрсем шутласси, решенисем çырасси кăна мар. Йертсе пырасси вăл, чăн малтан, вăрманта ĕçлекен кашни рабочи мĕнле пурăннине, мĕнле ĕçленине пĕлсе тăрса унăн ыйтăвĕсене йалан пурнăçа кĕртсе пымалла тăвасси, рабочисене политикă йенчен воспитани парас тĕлĕшпе йалан ĕçлесе пырасси пулат. Çакăн пек ĕçлеме пултаракан кадрсем кирлĕ вăрман хатĕрлевĕнче.

Вăрманта ĕçлекен рабочисем, колхозниксем политикăлă культуралă пунктăрсенчен инçетре пулаççĕ. Çакăн пек пулни вăл партипе совет тата профсойуз организацисем çине рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе уйрăмăн ответлă задачăсем кăларса тăратат. Çавăнпа та парти райкомĕсен вăрман рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе туса пынă çĕрте пуçламĕш парторганизацисене пулăшма кирлĕ таран коммуниссемпе комсомолецсене уйăрмала. Колхозниксемпе йединоличниксене ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет 1938 çулти майăн 16 мĕшĕнче вăрманта ĕçлекен колхозниксене çăмăллăхсем парасси çинчен йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарса памала.

Вăрман ĕçĕнче тăшмансемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсене хăйулăн та татăклăн пĕтерсе, вăрманта ĕçлекенсене пурне те социалисăмла ăмăртăва хутшăнтарса, стахановла йухăма вăйлатса пырса вăрман хатĕрлев планне йăнăçлăн тултарса пымала тăвар.

Чукунçул çинче ĕçлекенсен Октябĕр уйăвĕ умĕнхи ăмăртăвĕ

Вакунсене составран уйăрса илмесĕрех йусани

Тула чукунçул узелĕнчи маçтăр Стульникăв йултăш йертсе пыракан комсомолецсен çмени вакунсене составран уйăрмасăрах йусас тĕлĕшпе Октябĕр уйăвĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва пуçарса йана.

Комсомолецсен çмени икĕ уйăх хушши ентĕ вакунсене составран уйăрса илмесĕр, çул çинчех, пуйăссем станцăсенче чарăнса тăнă вăхăтрах йусаса пырат. Çак вăхăт хушшинче çменă 199 вакун йусанă, йусанă вăхăтра пуйăссене пĕрре те чарса тăман.

Маçтăр Борисăв йултăш йертсе пыракан çамрăксен çмени çак хушăра 149 вакун йусанă.

Комсомолецсен ĕç метăчĕпе ытти чукунçулсем çинче ĕçлекенсем те усă куraççĕ. Октябĕр уйăвĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, вагонниксем вакунсене пуйăссенчен уйăрса илмесĕр, çул çинчех йусас практикăна вăйлатса пыма йышăннă.

(ТАСС).

Автомотоциклетиссен Пĕтĕм Сойузри ăмăртăвĕсем

КИЙĔВ, çентаберĕн 19-мĕш. (ТАСС). Автомотоциклетсен Пĕтĕм Сойузри ăмăртăвĕсем пайанхипе иккĕмĕш кун пыраççĕ. Иккĕмĕш кунĕнче пĕр километр хушăна вырăнтан тапранса кайса чупас тĕлĕшпе ăмăртнă. Пĕтĕм Сойузри рекордсенчен иртсе кайнă Çамрăк мотоциклеткă Тепляковă (Мускав) „ИЖ-8“ 300 кубла сантиметр таран класлă машинăпа пĕр километр хушăна вырăнтан тапранса кайса 43,37 çекундăра чупса тухнă, унăн сехетри вăтам хăвăртлăхĕ 83 километр та 6 метр пулнă. Çав машинăпах Норман (Мускав) пĕр километр хушăна вырăнтан тапранса кайса 42,07 çекундăра чупса тухнă, вăл сехетри вăтам хăвăртлăх 85 километр та 571 метр пулат. Подольск хулинчен пынă мотоциклист Кулаков „ПМЗ“ 750 кубла сантиметр класлă машинăпа пĕр километр хушăна 35,32 çекундăра чупса тухнă. Вăл пĕр сехетре 101 километр та 925 метр кайни пулат.

ПСК(б)П историне таранăн вĕренме хатĕрленни

Муçкаври парткабинетсенче

Мускаври парти кабинечĕсем ПСК(б)П историне таранăн вĕренме хатĕрленес йенĕпе чылай пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ.

ПСК(б)П Мускав комитечĕн тата Мускав хула комитечĕн парткабинече ПСК(б)П историн пĕрремĕш сыпăкĕ çинчен калакан нагльаднăй пособисен тата литература выставкине хатĕрленĕ. Çакăн пек выставкăсене кунта ПСК(б)П историн кашни сыпăкĕ тăрăх организацилемеле. Парткабинет çумĕнче пропагандиссем валли Ленинăн тата Сталинăн уйрăм произведенийĕсем тăрăх лекцисем вуласа параççĕ.

ПСК(б)П Пролетарски райкомĕн парткабинечĕ, ПСК(б)П историн пĕрремĕш сыпăкĕ çинчен калакан нагльаднăй пособисен выставкисĕр пуçне, пропагандиссене пулăшас шутпа парти историйĕ ыйтăвĕсем йенĕпе ушкăнлă тата пĕчченлĕ консультацисем организацилет. Ростокински районĕнчи предприйатисенче, учрежденисенче тата шкулсенче çитес кунсенче пропагандиссем валли 27 семинар ĕçлеме тытăнаççĕ. Кунсăр пуçне, парти райкомĕ пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем валли ПСК(б)П историне вĕренме 7 кружок организациленĕ, унта 270 çын вĕренмеле.

(ТАСС).

Аеронавтсен рекордлă вĕçевĕ

Çентаберĕн 19-мĕшĕнче, 0 сехет те 25 минутра, 517 кубла метр пысăкĕш сферически аеростатпа аеронавтсем—майор-орденоносец Зыкăв йултăш тата иккĕмĕш пилот—виççĕмĕш рангри çар инженерĕ Йегорăв йултăш Мускавран ирĕклĕ вĕçеве туха кайнă.

Çентаберĕн 20-мĕшĕнче, ирхине 6 сехет те 10 минутра, аеростат Шепетовкă районĕнче (Каменец-Подольск облаçĕ) йăнăçлăн анса ларнă.

Совет аеронавчĕсен пысăк мар сывлăш шарĕ çинчи халиччен пулман вĕçевĕ 29 сехет те 45 минут хушши пынă. Малтанлăха шутланă тăрăх, Зыкăвпа Йегорăв йултăшсем „а“ класлă сферически аеростат çинче нумай вăхăт вĕçессипе халиччен тунă виçĕ рекорда çĕнтерсе илнĕ.

Халиччен иккĕмĕш категорилĕ аеростат çинче нумай вăхăт вĕçессипе Франци аеронавчĕ Жуль Дюбуа рекорд тунă пулнă. Вăл 1922 çулти май уйăхĕнче сывлăшра 23 сехет те 28 минут тытăнса тăнă. Çакăнпа пĕрле виççĕмĕш тата тăваттăмĕш категорилĕ аеростатсем çинче нумай вăхăт вĕçессипе совет аеронавчĕсем тунă рекордсене те çĕнтерсе илнĕ. Вĕсем Америкăри Хилл тата Шлоссер аеронавтсен показателĕсене те хыçала хăварнă, вĕсем 1927 çулти ийуль уйăхĕнче сывлăшра 26 сехет те 46 минут тытăнса тăнă пулнă.

(ТАСС).

Çурçĕрте пурăнакан нганасансем

Таймыр çурмаутравĕ çинче икĕ çул хушши ĕçленĕ хыççăн, ССРС Ăслăлăхсен Академийĕн Етнографи институчĕн аслă сотрудникĕ Попов йултăш Ленинграда таврăннă. Вырăнтан вырăна куçса çӳрекен народнăçăн—нганасансен материаллă культури тата хуçалăх йенĕпе вăл пысăк коллекцисем пуçтарнă.

Нганасансем пурĕ те 800 çын кăна. Пурăнасса вĕсем натуралă хуçалăхпа пурăнаççĕ. Пăлан тирĕсенчен çĕленĕ тумтир тăхăнаççĕ, вăрмансенче пурăнакан пăлансен какайне çиеççĕ. Вĕсем Йениçейран пуçласа Хатангă патне çитиччен таврашра пĕр вырăнтан теприн вырăна куçса пурăнаççĕ.

Нганасансем тискер-кайăксене темиçе тĕрлĕ ухута меслечĕсемпе тытаççĕ. Вĕсенчен пĕри вăл—пăлансене чăнрен сыхнă тантăсемпе тытни. Пăлансен пысăк йышлă кĕтĕвĕ чупса иртнĕ чухне, 15—20 пăлан майракисемпе танатасенче сыхланаççĕ. Пăлансен кĕтĕвĕ йуханшыв урлă ишсе каçнă чухне, нганасансем вĕсене çĕмренпе персе тытаççĕ.

Иртнĕ çулта нганасансем пурăнакан тĕп вырăн патне пĕрремĕш „хĕрлĕ чум“ килнĕ пулнă, вăл унта культуралă ĕçсем туса иртерес тĕлĕшпе халĕ те ĕçлет.

(ТАСС).

Германири фашисăма хирĕçле „салтаксен сойузĕ“ чĕнсе калани

Чехословаки çинчине пулса иртекен „маневрсене“ хутшăннă. Германи çарĕнчи салтаксем хушшинче фашисăма хирĕçле вăрттăн листовкăна—„салтаксен сойузĕ“ (Берлин гарнизонĕнчи çамрăк салтаксен фашисăма хирĕçле вăрттăн пĕрлешĕвĕ) чĕнсе каланине пысăк интереспа вулаççĕ. Гитлĕрпа Геринг Чехословакине хирĕçле ĕмĕчĕсене тăра шыв çине кăларса, листовка çапла çырат: „Пире—Германири çамрăк салтаксене—вăрçă кирлĕ мар, ытти халăхсен тата ытти государствăсен çамрăкĕсем çине тапанассине епĕр хирĕç тăратпăр. Епĕр фашиссен пуçлăхĕсене — вăрçă вăл фашисăма аркатса парахасси патне илсе çитересси çинчен асăрхаттаратпăр.

Германи йачĕпе, фашисла мар, чăн-чăн Германи халăхĕ йачĕпе, епĕр мир ыйтатпăр. Аллăрсене демократилĕ Чехословаки çинчен сирĕр!“

(ТАСС).

ФРАНЦИ КОМПАРТИЙĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

„Юманите“ хаçат Франци компартийĕ чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

Чĕнсе çырнинче çапла каланă: парламентпа ним канашламасăр-тумасăрах тытса пыракан Даладье политикки халăх фрончĕн программинче катартни пек çĕршыв ирĕккăмăлĕпе нихăш йенчен те сыхăнса тăмаст. Франци халăхĕ,—тесе кăтартнă чĕнсе каланинче,—çав политикăна хыттăн тарăхса хирĕç тăрат, мĕншĕн тесен вăл политикă çĕршывра 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен калакан саккуна пăсат, ватăлса ĕçлейми пулнă ĕççыннисене пенçи памала мар тăват, йалхуçалăхĕнче инкек-сийенсем пуласран нацилĕ касса тăвассине хирĕç тăрат тата фашиссен загăвăрла лигисене хӳтлет.

Чĕнсе каланинче Францири халăхсем Чехословаки халăхĕпе таранăн пĕр шухăшлă пулнине палăртнă. Францири коммунисла парти,—тесе каланă чĕнсе çырнинче,—Англири ĕççыннисене те тăванла салам йарат, Францири ĕççыннисем вĕсемпе сойуз туни фашиссене вăрçа чĕртсе йарассинчен кайала чакмала тăвĕ.

(ТАСС).

ЧЕХОСЛОВАКИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Чехословаки правительстви йышăннă решени

Йут çĕршывсенчи пичетре Чехословаки правительстви Англипе Францин сĕнĕвĕсене йышăннă тесе суйă хыпарсем сарнă пирки, Чехословакин телеграф агентстви вĕсем пачах суйă хыпарсем пулса тăни çинчен татăклăнах пĕлтерет.

Англипе Франци сĕнĕвĕсем тĕлĕшпе тăракан ыйту тăрăх Чехословаки правительстви йышăннă решенине пичетлесе кăларман. Чехословаки телеграф агентстви официаллă пĕлтернинче çапла калана: Чехословаки правительстви Францине Англи посланникĕсем патне нотă йанă, вăл нотăра Англипе Франци правительствисем пана сĕнӳсен пройекчĕ çине Чехословаки правительстви мĕнле пăхни çинчен пĕлтернĕ.

Ĕçсене тĕплĕн пĕлсе тăракан журналиссем пĕлтернĕ тăрăх, министрсен решенийĕсен тĕп шухăшĕсем çапла:

Чехословаки правительстви Англипе Франци сĕнĕвĕсене хирĕç çийĕнчех ответ пама пултараймаст, мĕншĕн тесен территорилĕ улшăнусем тăвассипе сыхăнакан ыйтусем тăрăх парламент решени йышăнни тата Чехословаки конституцине улăштарусем туни кирлĕ.

Ку ыйту Чехословаки государствин тулашне тухат тата Германипе Чехословаки хушшинчи тавлашулă ыйту пулса тăрат тесе шутласан, вара Чехословаки правительстви Германипе Чехословаки иккĕшĕ 1925 çулта туса çирĕплетнĕ арбитражлă договăр çине пăхма хушат (çав договăр тăрăх икĕ йенĕ те виçĕ государствă представителĕсенчен арбитраж комиссийĕ тума палăртаççĕ, çав государствăсене Германи те, Чехословаки те тавлашăва татса пама йурахлă тесе йышăнни кирлĕ).

(ТАСС).

Чехословаки халăхĕ Англипе Франци сĕнĕвĕсене хирĕç

ПРАГĂ, çентаберĕн 19-мĕш. (ТАСС) Пайан кăнтăрла 4 сехетре Англи посланникĕ Ньютон тата Франци посланникĕ де Лакруа президента Бенеша Англипе Франци сĕнĕвĕсене панă. Чехословаки министрĕсен кабинечĕ президент председателĕ пулса йертсе пынипе пĕр кун кунĕпех лару тунă. Правительствă мĕнле решенисем йышăнни халĕ паллă мар-ха. Халăха çĕнĕрен чĕнсе каланине кăнтăрла радио тăрăх панă, унта, ыттисемпе пĕрлех, çапла каланă: „Францишпе Англи министрĕсен Лондăнри канашлăвĕ вăл—Йевропăри хальхи вăхăтри кризис драмăлла аталанса пынин пĕр сыпăкĕ çеç пулса тăрат-ха тата вăл канашлу—йулашки сăмах пулнине пĕлтермест“,—тенĕ.

Хаçатсем пурте Англипе Франци позицине хыттăн сивлеççĕ, правительствăран çирĕп çулйĕр тытса пыма тата Лондăнпа Парижрен паракан „канашсене“ сирсе йама ыйтаççĕ. „Телеграф“ хаçат çапла çырат: „Икĕ фактăр çеç—пĕрлĕхлĕ хуçалăхлă çĕршыв пулса тăракан территорине никам тĕкĕнмеле мар туни тата çар сыхласа тăракан тĕрĕклетнĕ чикĕсем çеç—пирĕн республикă тĕрĕс тĕкĕл пурăнассишĕн чăн-чăн гаранти пулса тăрат. Çавăн пекех Австри те аслă державăсен гарантинче тăнă. Австри — усал пример, вăл пример пире хамăрăн пурнăçа, хамăрăн государствăна тата хамăр халăхăн чи кирлĕ интересĕсене çине тăрса хӳтлеме чĕнет“.

Хальхи вăхăтра мĕнпур коалицилĕ партисен йертсе пыракан органĕсем пĕрлехи ларăвĕ пуçланнă, ларува премйер-министр Годжа хутшăнса ĕçлет.

ГЕРМАНИПЕ ВЕНГРИ ЧЕХОСЛОВАКИНЕ ХИРĔÇ КАВАРЛАШАÇÇĔ

Венгри столицинчен—Будапештран пĕлтернĕ тăрăх, Венгри регенчĕ (правительствă пуçлăхĕ) Хорти, Гитлĕрпа тĕл пулса калаçма Германине кайнă. Германи Чехословаки çине тапăнма хатĕрленнĕ çĕре хутшăнас ыйтăва Венгри умне çивĕччĕн лартнă, тесе шутлаççĕ.

(ТАСС).

Германи вăрçа хатĕрленет

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, çентаберĕн 19 мĕшĕнче кунĕпех Германи çарĕсене Чехословаки чиккисем патне куçарса пынă. Çавăн пекех Германири çар влаçĕсем мобилизацилĕ ĕçсене татах та туса пыни çинчен пĕлтереççĕ, вĕсем хресченсен урапасене мобилизацилеççĕ тата резервра тăракансене çара илеççĕ.

Чехословаки çине тапăнса кĕмелĕх кирлине пурне те тунă тесе шутламала, тет пичет. Наступлени тума Гитлĕр приказ парсанах, мĕн пур çар вăйĕсен машини сийĕнчех ĕçлеме пуçламала.

(ТАСС).

Генлейнăвĕçсем йунвса хăратаççĕ

Çентаберĕн 19-мĕшĕнче Дрезденре (Германи) Германине тарса килнĕ 20 пин генлейнăвĕçсен (вĕсенчен уйрăм „Судет-нимĕç корпусĕ“ тунă) пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура генлейнăвĕçсен лидерĕсем Себековский тата Зандиер сăмах тухса каланă. Хăйсен сăмахĕсенче вĕсем çапла каланă: Германи çарĕ организациленĕ тата вăл йертсе пыракан „Судет-нимĕç корпусĕ“ çитес сывăх кунсенче Судет облаçне кĕрсе кайса, аллахĕн пăшал тытса облаçа Виççĕмĕш империн çумне пĕрлештерессине пурнăçа кĕртĕ,—тенĕ.

(ТАСС).

Польшă çарĕсем пырса капланнă

ВАРШАВĂ, çентаберĕн 19-мĕш. (ТАСС). Пайан Варшавăра правительствă хаçачĕсен васкавлă кăларăмĕсем тухнă, вăл хаçатсем Польшă çарĕсем Чехословаки чиккине пырса капланни çинчен официаллă пĕлтернĕ.

Польшă правительстви çак ĕçе пуçран шухăшласа кăларнă тĕрлĕрен провокацилĕ сăлтавсемпе тӳрре кăларма хătланат.

Польшă правительстви васкасах „Чехословакири поляксен правительствине кĕрешекен комитет“ тунă, çав „комитет“ Катовицăсенче Чехословакине хирĕçле митинг организациленĕ. Митинга радиопа пĕтĕм Польшă тăрăх панă, çав митинг йышăннă резолюци Польшă правительствинчен Тешинск Силезине (Чехословаки) Польшă çумне пĕрлештерес тĕлĕшпе халех мерăсем йышăнма ыйтнă.

ПСК(б)П Чăваш организацийĕн Облăçри XIX-мĕш конференцийĕн делегачĕсене пĕлсе тăма

Чăваш парторганизацин Облăçри XIX-мĕш конференцийĕ çентаберĕн 24-мĕшĕнче 6 сехетре каçхине кинотеатр çуртĕнче уçăлат.

Делегатсене ПСК(б)П Обкомĕн çуртĕнче 5-мĕш пӳлĕмре, партин йертсе пыракан органĕсен пайĕнче регистрациллеççĕ.

Ыйтса пĕлмелисем пулсан, 4—78 тата 2—83 номĕрсемпе телефон тăрăх дежурнăйран ыйтмала.

ПСК(б)П Обкомĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторгсене куллен йĕртсе пыни кирлĕ

Курбатăв йулташ Мамăшри пуçламĕш организацинче парторг пулса нумайах ĕçлемест. Кĕске вăхăтрах вăл парторганизаци ĕçне чылай малала йанă. Ĕçе вăйлатма ăна Шупашкарта парторгсен пĕр уйăхлăх курсĕнче пулни пулăшнă.

Вăл ĕçлеме пынă чухне пуçламĕш парторганизацинче 3 член тата пĕр кандидат пулнă. Йулашки вăхăтра парти кандидатне 4 çынна илнĕ. Халĕ тата 4 çын документсем хатĕрлесе çитернĕ. Вĕсене çитес пухура пăхса тухмала.

Парти ретне кĕнисенчен Михайлăв йулташа ПСÇЛКС райком çекретарне, Çутрукова—пушар инспекторне илнĕ, Гуçкова—Буденный йачĕпе тăракан колхоз председательне суйланă.

Иртнĕ вăхăтра парти ретне ÿстерессипе райкомра ĕçлекенсем те сахал ĕçленĕ. Райком çекретарĕ пулса ĕçленĕ Павлăв тата инструктăр Михайлăв йулташсем Михайлăв Владимира партине кĕме рекомендацисем панă. Вĕсем, Мамăша кайса Михайлăвăн ĕçĕсемпе паллашса, парти ретне илес ĕçе йăлтах пăхса тухас вырăнне, пуçламĕш организацинчи коммуниссене райцентра чĕнсе, пуху тума тытăннă. Ку ĕнтĕ парти ретне илесси çине райкомра ĕçлекенсем çийелтен пăхнине кăтартать.

Парторганизаци çумĕнче сочувствуйушчисен группи пур. Унта 4 çын шутланать. Кăçал 2 сочувствуйушчине парти кандидатне илнĕ.

Пуçламĕш организацинчи коммуниссем пурте хаçат илеççĕ. Политикăлă пĕлÿлĕхе хăпартассипе 2 кружок ĕçлет. Вăл кружоксене парти райкомĕн штатлă пропагандисĕ Андрейĕв йулташ йĕртсе пырать.

Курбатăв йулташ Шупашкарта парторгсен курсĕнче пулнă вăхăтра пухусем вăхăтра пулса иртмен. Пухусем иртерме парти райкомĕн представителĕсем сахал пыраççĕ. Райком инструкторĕ Дубров йулташ сайра хутран пыркалать, анчах пулăшу çителĕклĕ мар. Вăл партилĕ-массăлă ĕçе вăйлатма пулăшас вырăнне, ытларах хуçалăх ĕçĕсем çинчен интересленет. Парти кунĕсене хатĕрленсе иртерессипе, парти документĕсене йĕркелесе усрассипе тата коммуниссемпе партире тăманнисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçсене вăйлатассипе пулăшу сахал парать.

Парторганизаци çумĕнче уйăхра икĕ хут стена хаçачĕ тухса тăрать.

Пуçламĕш организацин çитменлĕхĕсем те нумай. Хĕрарăмсем хушшинче ĕçлесси начар тăрать. Вĕсенчен парти ретне пĕр çынна та илмен. Колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес ĕçе те начар йĕртсе пынă. Колхозри лаша хатĕрĕсем халĕ те уйрăм колхозниксен аллинче. Вĕсене 3 хут пĕрлештерме тытăнса та пурнăçлайман. Вĕсене халех пĕрлештермеле, йалхуçалăх артелĕн уставне пурнăçламала.

Чи пысăк çитменлĕх—пуçламĕш парторганизаци плансăр ĕçлени пулса тăрать.

Курбатăв парторга ПСК(б)П райкомĕн пысăк пулăшу памала. Райком инструкторне йарса, вырăнти ĕçсемпе паллашса, пуçламĕш организаци валли ĕç планĕ тума пулăшмала.

Пур коммуниссене те поручени сем парса, вĕсене пурнăçлама пĕрмайах пулăшса пымала, партилĕ ĕçе вăйлатмала. Кашни коммунис общĕствăлă ĕçре те, производствăра та малти ретре пример кăтартса пыракан пулмала.

Парти пухăвĕсене лайăх хатĕрленсе иртерме, протоколсене йĕркелеме пулăшмала. Парти пухăвĕ кашни коммунисшăн политикăлă воспитани паракан шкул пулса тăрать.

Курбатăв йулташ парторгсен канашлавĕсенче организацилĕ, партилĕ ĕçсем çинчен ытларах сÿтсе йавма ыйтать.

Çав ыйтусене парти райкомĕн пурнăçламалах.

Г. Сахалкин.

Кувакинă парторганизацинче

Партине çĕнĕрен илме тытăннăранпа вара партин Кувакинă районĕнчи организацине 41 çынна илнĕ. 32 çынна парти членĕн кандидатне, 9 çынна кандидатран члена куçарнă. Парти кандидатне илнипе члена куçарнисен шутĕнче комсомолецсем 23 çын. Çак вăхăтра сочувствуйушчисен ретне 23 çынна илнĕ.

Партине трактăрисем, комбайнерсем, колхоз производствинче лайăх ĕçлекен стахановецсемпе ударниксем кереççĕ. Комбайнпа ĕçлесе хăйĕн планне 144 процент тултарнă Кошелов йулташ, МТС директорĕн заместителне лартнă Каравайев йулташ партине кенĕ. Вĕсем хăйсем Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн керешнине ĕçне кăтартнă.

Анчах партине илес тĕлĕшпе начар ĕçлекен организацисем те пур-ха. Финанс пайĕпе банк çумĕнчи тата Миреври пуçламĕш парторганизацисем ку тарана çитсе пĕр çынна та парти ретне илмен. Партине кĕме тăрашакан йулташсене рекомендацисем тупма пулăшмаççĕ. Çапла, Казаков йулташ 1932 çултанпа кандидатра тăрать, анчах вăл члена куçма рекомендаци тупаймасть. Пуçламĕш парторганизацири коммуниссем Казаков йулташа лайăх пелеççĕ, çапах та рекомендаци пама иккĕленеççĕ.

Сочувствуйушчисен хисепне ÿстерессе çителексĕр пырать. Сочувствуйушчисенчен икĕ çынна çеç парти кандидатне илнĕ. Кладбищенскри организацире сочувствуйушчисем 13 çын, вĕсенчен пĕрне те парти кандидатне илмен. Çак факт парторганизаци сочувствуйушчисем хушшинче начар ĕçлени çинчен калать.

Комсомола пулăшас ĕç çителĕклĕ мар-ха

Тутаркас районĕнче чылай комсомолецсем парти ретне кереççĕ. Бычкова Ксенийа, Атапай йалсоветĕн председателĕ, пур хуçалăхла-политикăлă кампанисенче те йалсоветне районра малти ретре илсе пырать. Мургаш округĕнчи суйлавçăсем ăна ЧАССР Верховнай Совечĕн депутатне суйланă. Халĕ вăл парти ретне кĕчĕ. Польаков Григорий „Комбайн“ колхоз председателĕ тата комсомол организаторĕ пулса ĕçлет. Унăн колхозĕ пур парăмсене те татнă тата авăн çапса пĕтернĕ. Парти райкомĕ Польаков йулташа парти ретне илчĕ. Польаков йĕртсе пыракан пуçламĕш организацинчи комсомолецсем Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле çĕнĕ парнесем хатерлеççĕ. Кăçал 7 çамрака комсомол ретне илнĕ.

Пуçламĕш парторганизацисем комсомолецсене кулленхи ĕçре тата парти ретне кĕрессинче пулăшса пыни çителĕклĕ мар-ха. МТС-ри, Мургаш тата Калайкасси йалĕнчи организацисем пĕр комсомолеца та парти ретне илмен. МТС-ри комсомолецсем хушшинче производствăра стахановла ĕçлекенсем сахал мар. Парторг Федăрăв комсомол организацине пулăшас ĕçе хакламасть.

Мургашпа Калайкасси йалĕсем районра кайри ретре пыраççĕ. Ку ĕçсене малала йарас çĕрте комсомол пысăк пулăшу пама пултарать. Шишкинпа Тоймасăв парторгсем çавна шута илмеççĕ. Вĕсем комсомолецсене пухса пĕрре те калаçман. Хăшпĕр комсомолецсене палламаççĕ те. Кăтартнă йалсенче производствăра хастарлăн ĕçлекен комсомолецсем нумай.

Комсомолка Горланăва Гликерийа фермă пуçлăхенче 5 çул ĕçлет. Фермăри ĕçе лайăх организацилени пе кашни енерен тавлăкне 15 литр сĕт саваççĕ.

Трактористка М. Беловă кунне 7 гектар сухалать. Çавнашкал лайăх ĕçлекенсем татах пур.

Комсомолецсене парти ретне илессипе парти райкомĕн инструкторĕ Ф. Иванов начар ĕçлет. Комсомол ĕçĕпе интересленмест, пуçламĕш организацисене куллен пулăшмасть. Унăн участкинче комсомолăн пуçламĕш организацийĕ 21. Вĕсенчен парти ретне пĕр комсомолеца та илмен.

Парти ретне çĕнĕрен илес ĕçе пуçарса йанă хыççăн, Тутаркас ПСК(б)П райкомĕ 34 комсомолеца парти ретне илнĕ.

Хальхи вăхăтра комсомола пулăшас ĕçе парти райкомĕ вăйлатрĕ. Комсомол политвĕренĕвĕнчи кружоксене йĕртсе пыма 38 коммуниса çирĕплетнĕ. Вăл çынсемпе пĕр канашлу туса иртернĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕсем иртернĕ çĕрте пулăшма 20 коммунис уйарнă.

Парти райкомĕ конкретлă ĕçлеме тытăнсан, комсомолецсене парти ретне илесси те вăйланчĕ. Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци 7, парти райкомĕ çумĕнчи—8, Илйинкăри пуçламĕш организаци 4 комсомолеца парти ретне илнĕ.

Н. Йемелйанăв.

Суйлава хатĕрленме шутламаççĕ

ÇĔРПУ. „Цивильстрой“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организаци комсомолăн отчотпа суйлав кампанине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те ĕçлемест. Комсомол комитечĕн çекретарĕ С. Фомин комсомолецсем хушшинче суйлав инструкцине халĕ те ăнлантарса паман. Икĕ уйах хушши комсомолецсен пухăвĕ пулман, политвĕренÿве тытанман, ытти тĕрлĕ кружоксем ĕçлемеççĕ. Пуçламĕш комсомол организаци çумĕнче стена хаçачĕ тухса тăратчĕ. Йулашки вăхăтра, 3—4 уйах хушши ĕнте, хаçат тухмасть. Комсомолецсем член укçине вăхăтра тÿлемеççĕ. И. Шорин 3 уйахшăн тÿлемен, ытти комсомолецсем те çавнашкалах.

Колхозра комсомола кĕме йурăхлă çамраксем нумай, анчах çамраксем хушшинче ăнлантарулă ĕç çук. 1936—1937 çулта 29 комсомолец пулнă, пайанхи куна 11 комсомолец çеç йулнă.

Комсомол райкомĕн çекретарĕ Иванов йулташ комсомол организаци йапах ĕçленине пелет пулсан та, ĕçе йусаса йарас чухне лаплансa ларнă.

Сÿреклĕхе пĕтерсе, суйлава тата Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултаракан уйава пысăк çитенÿсемпе кетсе илмеле.

Чернов.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарас умĕн

Чăвашсен йалхуçалăх рабфакĕнче веренекен студентсем Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă уйава хатерленнĕ май, социализмла ăмăртăва ăнлăн сарса йачĕç. Кашни студентпа студент, курспа курс хушшинче ăмăрту договăрĕсем туса çирĕплетнĕ.

Сойузра тăмын çамраксем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕме хатĕрленеççĕ. Халĕ рабфак çумĕнче çĕнĕрен драмкружок, струнлă оркестр, литературă кружокĕсем организацилерĕç. Общĕствăлă организацисен (Осоавиахим, МОПР, РОКК) ĕçĕсене вăйлатреç.

Кашни студент Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă куна „отлично“ та „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе кĕтсе илме хатĕрленет.

Й. Çигайĕв,

Ан. Иванов.

Хаçатсене пăхса тухни

Хуçалăх ыйтăвĕсене тĕплĕн çутатмала

„Коммунисăмшăн“ хаçат (Канаш р-не) район тата йалсоветсемпе колхозсем хуçалăхлă ĕçсене мĕнле туса пынисене, государствăна уменчи нормăсене мĕнле тултарса пынисене çутатмасть теме çук. Ку ыйтусем тăрăх ийуль, август, çентабĕр уйăхĕсенче 7 умстатйа, заметкăсемпе çырусем 100 ытларах пичетлесе кăларнă. Çав статйасемпе заметкăсем, пуринчен ытла: „Государствăна тырă парса татни“, „Лайăх ĕçлекенсен опычесемпе ĕçлемели“, „Плана пурнăçламали“, „Плана ытлашшипех тултарни“, „Лайăх ĕçлекенсенчен пример илмели“ çинчен калаççĕ. Хаçат лайăх примерсем тăрăх вĕрентме тăрăшни вăл аван ĕç. Колхозсен, йалсоветсен лайăх ĕçĕсене кулленех çутатмала, начар ĕçлекенсене вĕсем пек ĕçлеме вĕрентмеле.

Анчах та, лайăх ĕçсене кăтартатпăр тесе, çитменлехсене тупса палăртмасни пирен сыхалăха, тăшмансен сăтарла ĕçесен йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешессине вăйсăрлатать.

Канашри вакунсем йусакан савăт кăçал пĕр уйăхра та хăйĕн производствăлă планне тултарман, суту-илÿ организацисем питĕ начар ĕçлеççĕ, растратăсем пысăк. Район йалхуçалăх ĕçесем йенĕпе кайа йулать, укçа-тенке пухас, государствă уменчи парăмсене тÿлесе татас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес т. ыт. ĕçсем йенĕпе кайа йулса пырать.

Çак факт вăл „Коммунисăмшăн“ хаçат хуçалăх ĕçесене пĕр йенчен кăна илсе çутатни çинчен калать. Хаçат, ĕçри лайăх йенсене кăтартнă вăхăтрах, ĕçĕн тĕп çитменлехесене сиктерсе хăварать, район хуçалăх ĕçесем пирки кайа йулса пынин сăлтавĕсене пăхса тухса анализ тумасть. Çапла вара, „Коммунисăмшăн“ хаçат тăшмансен сăтарла ĕçесен йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешес ыйту патенчен иртсе кайать. Çав виçĕ уйăхра тухнă номĕрсенче тăшмансен сăтарла ĕçесен йулашкисене пĕтересси мĕнле пыни çинчен, большевикла сыхăлăха ÿстересси çинчен пĕр сăмах та çырман.

Хаçат умстатйасенче ыйтусене политикăла çивеччĕн лартмасть. Ку тĕлĕшпе „Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, ăна пăхса çитентерес ĕçе тивĕçлипе организацилер“ йатлă статйа питĕ характерлă. Паллă, тăшмансем пирĕн хуçалăхăн çак отрăслинче нумай сăтар тунă. Анчах хаçат ку статйара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри сăтарла ĕçесен йулашкисене пĕтересси çинчен пĕр сăмах та каламан.

ПСК(б)П райкомĕ тăшмансен сăтарла ĕçесен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Район хуçалăх ĕçесемпе кайа йулса пыни парторганизаци фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандисен йулашкисене тăрă шыв çине кăларса тăпăлтарса пĕтерессишĕн çителĕксĕр кĕрешнине кăтартать. Парти организацине йаланах сыхă тăма, умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме пулăшмала. Унсăрăн „Укçа-тенкĕ пухассине вăйлатмала“, „Займ укçи пухасси начар“, „Суту-илÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелĕ“, „Кайа йулма нимĕнле сăлтав та пулмала мар“, „Çывăхри кунсенчех татăклă улшăну тумăла“ „Ĕçе тĕпренех вăйлатмала“ тата ытти çавнашкал кашкăрашнинчен усă сахал.

Хуçалăх ĕçĕнче çĕнтерÿсем тăвас тесен, парти организацин, советсен тата ытти организацисен ĕçĕнче большевикла самокритикăна ăнлăн сармала, революцилĕ сыхăлăха вăйлатмала, халăх тăшманĕсен йулашкисене нимĕн хĕрхенмесĕр тапăлтарса пымала. Çавăнпа та хаçатăн хуçалăх ыйтăвĕсене çийелтен мар, тĕплĕн, тарăнăн илсе çутатмала, кашни фактран политикăла вывод тумала, çитменлĕхсемпе йăнăшсене хытă критиклемеле.

Лайăх ĕçлекенсем плана тултарнă

ШĂХАСАН. Чуракасси йалсоветенче виççĕмĕш квартал финанс планне 110 процент тултарнă. Ку йалсоветне районĕçтăвкомăн куçса çÿрекен йалавне пачĕç. Çавăн пекех Варман Йенеш йалсовечĕ те (йалсовет председателе Михайлăв, налог агенче Петров) укçа-тенкĕ пухас ĕçе лайăх туса пырать. Финанс ыйтăвĕ пирки ăнлантару ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Михайлăв укçа-тенкĕ пухас ĕçе актива хутшăнтарнă. Çапла ĕçленипе плана 108,6 процент тултарчĕç. Шăхасан йалсоветĕнче плана 90,0 процент тултарса, районра виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Пĕтĕмĕшпе илсен районра укçа-тенкĕ пухас ĕç çителексĕр пырать. Районĕпе плана 64,85 процент анчах тултарнă. Шекер йалсовечĕ 28,5 процент, Троицки йалсовечĕ 25,2 процент, Малти Ăнтавăш йалсовечĕ 30,2 процент çеç тултарнă.

Анат Сурăм йалсовет председателĕ Димитрийĕв тата налог агенчĕ Орлов активпа çыхăнса ĕçлеме пелмеççĕ. Йалсовечĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçре налог агентне пулăшмасть. Йалсовет председателĕ Димитрийĕв: „Елĕр шалу унтан сахал илетпĕр, пĕччĕнех ĕçлетĕр“,— тесе ĕçрен пăрăнса йулма пăхать. Çакна пула ĕнтĕ виççĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пит сахал пухнă.

Ив. Федотăв.

Йулхав почтальйон

Пÿртлĕри (Турхан р.) почтальйон М. Лапташкинă колхозниксем хушшинче хаçат журнал сарас тĕлĕшпе ĕçлемест, çырусене вăхăтра çитерсе парасшăн тăрăшмасть. Ку йалта пурĕ 90 кил шутланать. Çентабĕр уйăхĕшĕн хаçат-журнал 45 екземпльар çеç сарнă. Лапшин.

Шиксĕрлĕх, хăйулăх, паттăрлăх

Августăн малтанхи кунĕсем. Пĕтĕм аслă Совет çĕршывĕ, пĕтĕм 170 мĕлйунлă совет халăхĕ Йапони военщинин Хасан кÿлли районĕнче пирĕн таса чикĕ урлă каçма хăтланнишĕн питĕ хытă тарăхнă. Аслă халăх тарăхăвĕ питĕ хăрушă. Унăн хăватлă сассине çав кунсенче, çав сехетсенче хăйĕн паттăрлăхĕпе, хăйĕн йунĕпе, пурнăçĕпе совет çĕрĕн кашни вершукне сыхланă, Йапони самурайĕсене çапса аркатнă Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи хĕрлĕ йалавлă фронтри бойецсем йар уççăн илтнĕ. Урса кайнă бандитсем Безымйаннайа высота çинчи пирĕн чикĕ хĕрринчи отрйад çине малтанхи хут провокацилĕ тапăнсанах, совет хĕçпăшалĕн вăйне, хăйĕн телейлĕ амăшĕн-тăван çĕршывĕн хĕвелтухăçĕнчи чиккисене сыхлакан совет бойецĕсен вăйĕпе çирĕплĕхне туйрĕç. Çав кунсенче тухнă „Тревога“ хаçатра (Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи хĕрлĕ йалавлă фронтри красноармейĕцсен хаçачĕ) пичетленнĕ бойецсемпе командирсен нумай корреспонденцисемпе заметкисене вуласан, тăван çĕршывăн мухтавлă ывăлĕсемпе, çавнашкал легендарлă паттăрсем вĕрентсе çитĕнтернĕ çĕршывпа, хăватлă Хĕрлĕ Çарпа чăннипех мухтанас шухăш çавăрса илет.

Йапони самурайĕсем пирĕн чикĕ хĕрринчи отрйад çине малтанхи хут тапăннине сирсе пăрахни çинчен „Тревога“ хаçат акă мĕнле çырать.

Ийулĕн 29-мĕшĕнче чикĕ хĕрринчи отрйад Безымйаннайа высота çинче тăнă. Снайпĕрсем, пулеметчиксем, стрелоксем—кашни тĕттĕм çĕрле хăйсем тавра мĕн пуррине тимлĕн итлесе пăхса тăнă. Йапонецсем йенчен провокаци тăвасси чарăнмасть, уйрăмах сыхă пулмала. Сасартăк красноармейĕцсем Безымйаннайа высота па хирĕç тăракан сÿлĕ вырăнти йапонецсем аннине асăрханă. Кун çинчен çийĕнчех лейтенант Махалин йулташа пĕлтернĕ. Тăшмансем пирĕн çĕршыв чикки урлă каçма шутласан, вĕсене татăклă отпор пама пурте хатĕрленнĕ. Бандитсем пирĕн чикĕ урлă каçнă, пирĕн пограничниксем çине пулеметран пеме тытăннă. Тăшмансене хирĕç çапăçма тытăнма вăхăт çитнĕ, лейтенант Махалин командă панă:—Огонь!

Пирĕн чикĕ хĕрринчи пĕчĕк отрйадпа Йапони çарĕн пĕр роти хушшинче çапăçу пуçланса кайнă. Çак çапăçура совет пограничникĕсем тĕлĕнмеле хăйулăх, паттăрлăх кăтартнă. Пирĕн пограничниксене кашниннех вăй тĕлĕшĕнчен нумайрах тăшмана хирĕç çапăçма тивнĕ. Легендарлă çапăçу сарăлса кайнă, унта пограничниксем тĕлĕнмеле хăйулăх, шиксĕрлĕх, хăйсем вăрçă вăхăтĕнче мĕнле пулма пĕлнине çеç мар, çавăн пекех совет бойецĕсен ытти чаплă йемĕсене: пĕр шухăшлă, пĕрлĕхлĕ пулнине, йулташа çăлма хăйĕн пурнăçне хĕрхенменнине кăтартнă.

„Красноармейĕц Степан Афанасйĕвич Бигус малта тĕмеске çине хăпарнă Йапони пулеметчикне курнă... Снайпĕр Бигус пеши тĕрĕс пулнă. Йапони пулеметчикĕ кайса ÿкнĕ, ун аллинчен пулемет тухса ÿкнĕ. Çакăн хыççăн йапонецсем снайпĕр çине пеме тытăннă. Бигус пограничниксем çине тапăнса пыракан йапонецсене пĕрин хыççăн теприне пĕтернĕ. Йапонецсем патнех çывхарса çитнĕ. Кунта вăл йăвăр аманнă йулташне курнă. Бигус пĕр аллипе винтовкине тытса, тепĕр аллипе аманнă йулташне тыла илсе тухса тăратнă. Йапонецсем Бигус хыççăн кайма тытăннă. Йулташне хăрушă мар вырăна илсе тухсан, Бигус вăрăм курăк ăшне кĕрсе выртнă, пĕр вăхăтлăха пемесĕр тăнă. Унтан инçе мар тăракан Йапони пулеметчикĕ Бигус вилнĕ тесе шутланă. Вăл совет пограничникĕ çине тимлĕн пăхса ун çине тата тепĕр хут пеме хатĕрленнĕ. Çак вăхăтра Бигус пăшалтан пенĕ те, Йапони пулеметчикне йăвантарса йанă. Тепĕр йапонец ун патне чупса пынă. Бигус йапонеца хирĕç прикладпа çапăçса çăлăнма тытăннă. Бигус хăй аманнă пулин те, пирĕн çĕршыв çине тапăнакан Йапони самурайĕсем çине пăшалтан пеме пăрахман“.

Çав хăйулă, паттăр Бигус кам вăл? Пурнăçра нумай йăвăрлăх тÿснĕ, вăрçăсенче çапăçса пиçнĕ бойец-и тен? Çук, Бигус чикĕри службăра пĕрремĕш çул çеç пурăнать. Вăл—трактăрис пулнăскер.

Красноармейĕц Кособокăва тăшман хĕçпе хулпуççине тата аллине касса суранлатнă пулин те, вăл хăйĕн постне пăрахса кайман. Суранланнă пулин те пулеметчик Кобйаков пулемета пăрахса кайман. Ăна госпитале илсе пырсан, унăн малтанхи ыйтăвĕ акă мĕн пулнă: „Ман пулемет тĕрĕс-и, çĕмĕрмен-и, ăна йапонецсем туртса илмен-и?“ Лейтенант Махалин паттăрсен вилĕмĕпе вилсен, отделени командирĕ Шдахăв, хăй суранланнă пулин те, çийĕнчех çапăçăва йертсе пырас ĕçе хăй çине илнĕ.

Хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн йуратни, хăйĕн халăхне, партине, Сталина чĕререн парăнни, хăйĕн ĕçĕ тĕрĕс пулнине нимĕн иккĕленмесĕр ĕненсе тăни — акă мĕн хавхалантарнă. акă мĕн кашни бойецпа герой тунă.

„Çĕрлехи лăпкăлăхра лейтенант Терешкин йулташăн çирĕп сасси йанрасa карĕ, тесе çырать „Тревога“. Вăл хăйĕн бойецĕсене шуса пыракан çĕленсене хирĕç штыкпа çапăçма ура çине тăратнă. Сопкăсенче тăшманпа хĕрÿлĕ тытăçу пынă чухне малтанхи хут тăван совет çĕршывĕшĕн паттăрла ĕç тума чĕнекен сасă йанрасa кайнă. Терешкин кăшкăрнă:

— Сталин йулташшăн, малалла!

Бойецсем малалла çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Тытăçу хайар, класлă тытăçу пулнă. Красноармейĕцсен „Урра“ йанрасa кайнă. Отделени командирĕ Никон Шиплов Йапони офицерĕпе алран-ала тытăçнă. Тăшман совет патриочĕн кăкри çине револьверпе тăллавнă. Шиплов ĕлкĕрсе кайман. Вăл шулахай аллипе тăшман аллине йарса тытнă, чышкăпа çапса тăшмана йăвантарса йанă, револьвере туртса илнĕ, тăшмана персе вĕлернĕ“.

Тĕрлĕ хĕçпăшаллă бойецсем пурте, тĕрлĕ службăсенчи бойецсем пурте патриотисăмăн аслă шухăшĕпе, кăмăлĕпе тулнă, пурте çапăçăва кайăсшăн çуннă, пĕр пек хăйсене панă заданисене тĕрĕс, никам та тыла йулассăн пулман. Пурте пĕр пек хăйсене панă заданисене тĕрĕс, вăхăтра, пысăк хастарлăхпа, мухтавлăхпа пурнăçа кĕртнĕ.

„Красноармейĕц Касйанăв, ПСÇЛКС членĕ, çыхăну службинче ĕçленĕ. Тăшмансем пăшалтан тата пулеметран вĕçĕ-хĕррисĕр пенĕ чухне унăн подразделенисене донесенисем илсе пымала пулнă. Хăйĕн заданине пурнăçа кĕртнĕ чухне Касйанăва противниксем хупăрласа илнĕ. Унăн лашине амантнă, пуçри пилоткине путă хывса кайнă. Анчах матур Касйанăв тăшмансем хупăрласа илнинчен çăлăнса тухнă. Донесенисене пырса пама—приказа тĕрĕс тата срукра пурнăçа кĕртме ăна никам та чăрмантарма пултарайман“.

Питĕ чаплă, нимĕн хăрамасăр, хăйулăн тунă ĕç çинчен „Тревога“ хаçатра танк чаçĕн командирĕ, аслă политрук Й. И. Йефимăв йулташ каласа парать.

Комиссар Йефимăв паттăрлăхăн примерне, кирлĕ пулсан хăйсене хăйсем хĕрхенменнин примерне кăтартнă. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи хĕрлĕ йалавлă фронтри политработниксенчен пĕри. Вĕсем, Йефимăв пеккисем, Ленин—Сталин аслă партин тивĕçлĕ ывăлĕсем пулнине кăтартрĕç. Атакăна вĕсем йаланах малтан кайнă. Çакăн пек кĕрешнĕ аслă лейтенант, коммунис Левченко та.

„Бойецсем хăйсен командирĕ, виçĕ хут суранланăскер, хăй тăрăх йун йухтарса подразделени умĕнче малта пынине курнă. Командирăн çирĕплĕхĕпе чăтăмлăхĕ бойецсене тăван çĕршыв умĕнчи çар обйазăннăçĕ çинчен, тăшмана курăймалăхĕ çинчен сăмахран вăйлăрах каланă. Хăйсен паттăрĕ—командирĕ хыççăн бойецсем виçĕ хутчен атакăна кайнă, виçĕ хутчен хайăрран наступлени туса çĕнĕрен тапăнса пыракан Йапони захватчикĕсене нимĕн хăвармиччен çĕмĕрсе тăкнă. Виççĕмĕш атакăра Левченко йертсе пыман, нимĕн шарламасăр çĕкленсе тăшман çине сиксе ÿкнĕ, бойецсене хавхалантарнă. Çапăçу татăклă, кĕске пулнă. Тăшмана татăкăн-татăкăн тураса тăкнă“.

Большевиксен парти ĕçхалăхĕ умĕнче питĕ авторитетлă, ăна ĕçхалăхĕ чĕререн йуратать. Хасан кÿлли районĕнчи çапăçусен кунĕсенче комиссарсем, политработниксем, бойец-коммуниссем пĕтĕм çĕршыв умĕнче, пĕтĕм çар умĕнче, пĕтĕм тĕнче умĕнче нимĕнле йăвăрлăх умĕнче те чарăнса тăман большевик сăн-сăпатне кăтартрĕç. Массăсен чăн-чăн çулпуçĕсем, коммуниссем йаланах авангардра, чи малта пулнă, чи хăрушă вырăнсене хăйсем чи малтан кайнă.

„Артиллери кĕрленĕ, пулемет шăтăртатнă чухне, — тесе çырать „Тревога“ „Вăрçă лару-тăрăвĕ чухнехи партилĕ ĕç“ йатлă статйара, — политработниксем хăйсен вăйлă хĕçпăшалне —агитацилĕ-пропагандăлă ĕçе нихăçан та пăрахман“.

Политрук Рйабой йулташ похода кайас умĕн бойецсене пуçтарса вĕсемпе Йапони агрессăрĕсен йут çĕршывсене туртса илес политики çинчен калаçу туса иртерсе, бойецсене çĕклентерсе йанă. Унтах:

—„11 бойец партине кĕме, 14 бойец комсомола кĕме заявлени панă.

Кĕçĕн командир Третйаков йулташ каланă:

— Çапăçăва большевик пулса кайас килет, тăшмана хирĕç хамăн вăйа, пурнăçа хĕрхенмесĕр кĕрешетĕп.

Тепĕр бойец Андрийанăв, çамрăк политрук Куйорăв каласçуне итлесен, хумханса çапла каланă:

— Хĕрлĕ йалавпа пирĕн аттесем Октйабĕрти революцишĕн пынă вăрçăра çапăçнă, çав йалавпа халĕ эпĕр çапăçăва кайатпăр, ăна Заозерпайа высота çинче вăлнăштеретпĕр“.

„Комиссар пулса Трофимăв аслă кайнă чаçре 100 бойен комсомола, 11 бойен партине кĕме заявлени панă“.

Красноармейĕц Бигус, отделени командирĕ Шдахăв йулташсем çапăçу хыççăн хăйсене партине илме заявлени панă, красноармейĕц—Лесьак, Кувшинăв йулташсем комсомола илме ыйтнă. „Тревога“ хаçат парти тата политработниксем авторитечĕ питĕ пысăккине кăтартакан фактсене нумай пичетлесе кăларнă. Паттăрлăхшăн, хăйулăхшăн, большевикла тÿрĕлĕхшĕн бойецсем хăйсен политработникĕсене, командирĕсене чĕререн йуратаççĕ. „Военком Пожарскин пурнăçне вилĕмĕ“ йатлă статйара хаçат тăван çĕршывшăн хăйĕн пурнăçне панă Иван Алексейĕвич Пожарски большевикăн паттăр ĕçĕсене, кĕрешÿне сăнласа кăтартать.

„Тревога“ хаçатри хумхантаракан корреспонденцисемпе заметкăсене вуланă чухне совет çĕршывĕн çав тери хăватлă вăйне, халăх хăйĕн çарĕпе тичĕ сыхăннине, пирĕн мухтавлă бойецсем тăван çĕршыва мĕнле хытă йуратнине питĕ пысăккăн туйатăн. Халăх хăйĕн çарĕпе чĕререн сыхăну тытнине, çак сыхăну пирĕн çара никам çĕнтерейми тунине пĕр бойецăн амăшĕ командована патне йанă çыруна йар уççăн кăтартса панă. Сырупе Горовскран çапăçура суранланнă отделени командирĕ амăшĕ полковник Гребенник йачĕпе йанă. Вăл çапла çырать:

„Ийулĕн 29-мĕшĕнче Йапони-Манчжур бандичĕсем пирĕн чикĕ урлă каçнă чухне пулнă çапăçура манăн ывăл Трофим Михайлăвич Шлехăв паттăрлă ĕç туни çинчен панă сирĕн телеграммăна илтĕм. Енĕ хамăн ачапа мухтанатăп, хамăрăн чикĕсене тата çирĕпрех, çивĕчрех сыхлама ăна хăвăртрах сывалма сунатăп. Марийа Антонйăвна Шлехăвă“.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи хĕрлĕ йалавлă фронтри бойецсен, командирсен, политработниксен кирлĕ, совет çĕршывĕн кĕрешес ĕçре тунă пĕтĕм паттăрлăхне тупи сÿтĕтсе пăрас пулсан, аслă кулом пик пулмалă, чи лайăх красноармейĕц ... курмала тесе çырать „Тревога“ хаçат тĕрĕс калать.

Социалисăмлă ăмăртăва хутшăнна

ЙЕПРЕÇ. Çак кунсенче выльăх-чĕрлĕх ĕçĕпе ĕçлекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес-сипе Йепреç районĕ чылай ситĕ-кÿсем тунă пулсан та, пысăк çит-меллĕхсем пуррине палăртрĕ. Колхозсенчи хăшпĕр фермăсенче аратлă выльăх-чĕрлĕхшен кĕрешес ĕçе напахтарса янă. Ку вал уйрăмăнах „МОПР", „Искра", „10 лет Октября" колхозсенчи фермăсенче палăрать. „10 лет Октяюря" колхозри сысна вити кĕç-вĕç йăтăнса анас пек ларать пулин те, ăна йусама шутламаççĕ. Колхоз председателĕ Халапçин: — „Витене йусаттарма укçа çук", тесе пурăнать. Фермă начар мар ĕçлет. Фермăра аратлă, пысăк тухăçлă сыснасем чылай. „Моçкă" ятлă сысна ами кашни çăвăрламассерен 12-шер çăвăр парать. 1937 çулта фермăран сыснасем сутса колхоз 5 пин тенке тупăш илнĕ. Фермă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме панă кăçалхи плана 122 процент тултарнă.

„Искра" колхозра (председателĕ Афанасьев, ферма пуçлăхĕ Кожурин) фермă ĕçне пĕтĕмпех йухантарса янă. Фермăри сыснасем çине пăхма хăруша, шурă сыснапа хуррине уйăрса илме хĕн. Сыснасем çĕр çинче выртса пурăнаççĕ. Вите урайĕсем çĕрсе пĕтнĕ, вите тĕррине витмен. Сыснасене апат парас ĕçре зоотехника правилисене пăхăнмаççĕ.

Районра лайăх ĕçлекен фермăсем те пур. „Çĕрпÿ", „Большевик" колхозсенчи фермăсене илер. Çав колхозсенчи фермăсем мухтава тивĕç. „Большевик" колхозри ене ферми выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана çултан-çул тултарса пырать. 1938 çулхи планпа фермăра 85 ене пулмала пулсан, пайанхи куна 94 ĕнене çитнĕ. Государствăна аш-какай парас плана тултарнă.

Фермăра çамрăк парусене лайăх пăхса ÿстереççĕ. Кăçал 21 ене пăрулана, вĕсен пăрушĕсем пурте тĕрĕс пурнаççĕ, ĕнесем сĕт парасси çултан-çул ÿссе пырать. „Красуля" ятлă ене 15 литр, „Комсомолка"—10 литр параççĕ. Колхоз кăçал сĕт-çу сутса автомашинă илме договăр тунă.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхма пĕлес пулать, весене йуратса пăхмала. Сыснасене мĕн чухлĕ йуратса пăхатăн, весенчен ытларах тупăш илетĕн. Çавăнпа та фермăсен ĕçне куллен-кун вăйлатса пымала, сыснасене зоотехникă хушнă пек пăхмала,—тет „Правда" колхозри фермă пуçлăхĕ Петров йулташ.

Канашлăва пуханнисем пĕтĕм сойузри ăмăртăва хутшăнса, малашне выльăх-чĕрлĕх ĕçĕпе ĕçлессине вăйлатса йама пулса хăйсем çине çакăн пек обйазательствăсем илчĕç:

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государствă плане пур йĕнĕпе те пĕтĕмĕшпех вăхăтра тултармала. Государствăна аш-какай парас плана октаберĕн 1-мĕшне тултармала, 1939 çулшăн аванĕ шучĕпе аш-какай парассине организацилемеле, 1939 çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне ĕнесĕр колхозниксене пурне те ĕнеле туса çитермеле. 1939 çулта кашни ĕнерен 1300 литр сĕт суса илме, майракала шултра выльăхсен вăçне (пĕр çула çитнисене) 180 килограм турткан тума, кашни сысна аминчен 14 çăвăр илме, тыхасене пурне те тĕрĕс пăхса ÿстерме, кĕçресене пурне те хăмлаттарма, сурăх фермисенче 100 сурăхран 130 путек илме, *кашни сурăхран 2,5 килограм çăм касса илме йышăнчĕ районри канашлу.*

Выльăх апачĕпе тĕрĕс тата лайăх усă курас тĕлĕшпе пăспа çемçетсе, дрожжевани туса т. ыт. майпа усă курассине организацилемеле. Выльăх апачĕсемпе тĕрлĕ майпа усă курма кашни колхозрах апат тумалисем хатĕрлемеле. Апат хатĕрлес ĕçпе ĕçлеме кĕске срукла курс туса иртермеле.

Асăннă обйазательствăсене пурнăçлас майпа выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе ĕçлекенсем пĕр-пĕрипе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç.

Дм. Михайлăв.

Кĕрхи çĕртме тума васкамаççĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хăйĕн постановленийĕнче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пирĕн республикăра йапăх пынине палăртса хăварчĕ. Кунпа пĕрлех кĕрхи çĕртмене октаберĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтерме кăтарту пачĕ. Ку срук çитесси нумай йулмарĕ. Анчах, Трак районĕнче ĕç çаплах йапăх пырать. Районри колхозсенчен çурри йахăн ку вăхăтчченех кĕрхи çĕртме тума тытăнман. Чылай колхозсем МТС трактăрĕсем çине шанса, лашасемпе сухаламасăр вăхăта ирттереççĕ. Çав вăхăтрах трактăрĕсем йĕркелĕн ĕçлени çук. Тĕрлĕ сăлтавсемпе простойсем тăваççĕ.

„Свобода", „Коминтерн", „Янмурзино", Буденный тата Кагановăч йачĕпе тăракан колхозсен лашисем ирĕкре, ĕçсĕр çÿреççĕ пулсан та, кĕрхи çĕртме тума тытăнман.

Партипе совет организацисен тата çĕрĕç оргăнĕсен кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пуçарса, вăл ĕçе йĕртсе пымала. Чăваш правителстви кăтартса пана срук тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтермеле.

А. Кисельов.

Пĕрремĕш квитанци

Вăрмак Йенĕшри (Шăхасан р.) „Ирĕклĕх" колхоз авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă хыççăн, пахча-çимĕççене пуçтарса кĕртме тытăнчĕ. Уйри çĕрулмисене пуçтарса кĕнĕ. Çавнашкалах государствăна çĕрулмилеççе парса, районра пĕррĕмĕш квитанци илчĕ.

И. Смирнов.

Амурти хĕрлĕ йалавлă çар флотилийĕ.

УКЕРЧĔК СИНЧЕ: 1929 çулта Сунгари йуханшывĕ çинче пулнă çапăçу участникĕсем—командирсем. Малта (сулахайран): П. И. Перова, М. С. Вырупайĕв, В. А. Подгурский. 2-мĕш ретре: орденоносец Н. К. Лозовой тата Ф. П. Желло.

С. Образцов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Инçетри Хĕвелтухăçне

Çентаберĕн 17-мĕшĕ. Каç. „Ильич" колхоз клубĕ уйавла капар тумланнă. Клуба çамрăксем те, ваттисем те нумай пуханнă. Весем хăйсен хастарла çамрăкне Хĕрлĕ Çара ăсатас йатпа вечăра килнĕ. Хĕрлĕ Çар ретне кайакан Петĕре хăйсен кăмалне-шухăшне калама пынă.

Малтанах Димитрийĕв комсомолец тенчери пăру-тăру синчен доклад туса панă. Унтан Йăсливанов колхозниксем тухса калаçрĕç. Вăра вечăра пуçтараннисем пурте пĕр шухăшпа Петр Мукина Хĕрлĕ Çарта политикăпа çар ĕçне хастарлăн вĕренме, дисциплинăна çирĕп тытма, хамăр тăван çĕршыв чиккине тимлĕн сыхлама сĕнчĕç.

Йулашкинчен Петр Мукина „сăмах пачĕç. Вăл çапла каларĕ:

— Ене хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çар ретне пĕтĕм хавасăлăхпа кайатăп. Пирĕн телейлĕ çĕршыври кашни çамрăкан кăмалĕ çавăн пек енте, урăхла пулма та пултараимаст.

Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Хасан кÿлли патĕнче пулса иртнĕ çапăçу çинчен епĕр пĕлетпĕр. Ене Инçетри Хĕвелтухăçне кайатăп. Мана та çавăн пек Йапони самурайĕсемпе çапăçма тивсен, хамăн вайа та, пурнăçа та хĕрхенсе тамап. Тăшмансене çапса салатаччĕнех кĕрешĕп. Тăрăшса вĕренсе, хĕрлĕ командир йатне илме тивĕçле пулăп,—терĕ.

Мукин пултарулă красноармеец пулассине шансах тăмала. Вăл хастарла комсомолец, колхозри стахановец, совет çĕршывĕн çамрăк патриочĕ. Колхоз ĕçĕнче вăл йаланах нормăна ытлашшипех тултарса пынă. Унсăр пуçне колхозри агитатăр тата стена хаçат редакторĕ пулнă. Вăл Хĕрлĕ Çар шкулĕ пулса тăнине те аван пĕлет. Уйăн пĕр пиччĕшĕ Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи çарти кĕçĕн лейтенант. Теприччĕшĕ Хĕрлĕ Çарта пулнă хыççăн Çĕнĕрех йулнă, халĕ кĕçĕн вăтам шкулта учител пулса ĕçлет. Хĕрлĕ Çар весене вĕренсе çитентернĕ. *Унта кайаччен весем те Петĕр пекех колхозра ĕçленĕ.*

Мукина колхозра лайăк ĕçлесе пынăшăн колхоз правленийĕ премиленĕ.

* * *

Çентаберĕн 18-мĕшĕ. Пайан ирех Шăхасан йалĕн аслă урамĕ-не лав хыççăн лав иртсе пырать. Пулас красноармеецсем çар паеççене кайма райĕçтавкома пуçтăранаççĕ.

„По долинам, по загорьям,
Шла дивизия вперед"...

Урамра йура илтенчĕ. Урам тăрах красноармеецсем стройпа йура йурласа пынанах туйăнчĕ. Анчах ку строй мар. Весем Тăрăнсем. Колхоз председателĕ, бригадирĕ т. ыт. хăйсен колхозĕн çамрăкне Йакавлĕв Васçилине Хĕрлĕ Çара ăсатаççĕ. Вĕсем урапа çине ларнă, пĕке çине хĕрлĕ йалавсем çакнă, красноармеецсен йуратакан йуррине илемлĕн шăрантарса райĕçтавком патнелле пыраççĕ.

Пулас красноармеецсем призыв пункчĕн çуртне пуçтаранса ларнă. Хăшĕсем патефон итлесе лараççĕ, хăшĕсем бильйардла выляççĕ, хăшĕсем калаçса лараççĕ. Весем хушшинче Мукин Петр та пур. Вăл хăйне колхозра йĕпле ăсатни çинчен йулташĕсене каласа парать.

12 сехетре пурте машинсемпе Канаша тухса карĕç.

С. Соколов.

Пĕр килĕрен 4 çын Хĕрлĕ Çарта

Георги Гурийĕв Çĕн Кавал йалĕнче (Вармар р.) çуралса ÿснĕ. Халĕ вăл Арапусĕнче налог агенчĕ пулса ĕçлет. Вăл ĕçлеме пуçличчен ку йалсовечĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçре йулса пынă. Халĕ вăл тăрăшса ĕçленипе йалсовечĕ районра вицçĕмĕш вырăна тухрĕ.

Ăна Хĕрлĕ Çар ретне илчĕç. Вăл çав тери савăнать, ачаран кĕтнĕ ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ.

Георгин виçĕ пиччĕшĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Хĕрлĕ Çарта пурăнаççĕ. Аслă пиччĕшĕ Лăпкă океан синчи флотра, Демйанпа Михаил—пехотăра.

Георги ашшĕ ывăлĕсем Хĕрлĕ Çара кайнишĕн савăнать.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановла çирĕмкунлăх

Бригадăсен ÿсĕмĕсем

Виççĕмĕш участкăри çĕр чавакансен бригадисем стахановла çирĕмкунлăх пуçланас умĕн илнĕ обйазательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Царйов, Кривцов, Лавренĕв йулташсем йĕртсе пыракан бригадăсем стахановла çирĕмкунлăхăн малтанхи вунăкунĕ хушшинче вăтамăн шутласан кашни кунах плана 200 процент ытларах тултарса ĕçленĕ.

Царйов йулташ бригадинче 8 çын. Ку бригада май уйăхĕнче кăна организациленнĕ. Рабочисем хушшинче çирĕп дисциплина туни, кашни рабочине хăйне уйрăм ĕç валеççе пани, ĕç тухăçлăхне кĕске вăхăтрах чылай çÿле хăпартма пулăшрĕ. Ку бригада август уйăх планне те 205 процент тултарнă.

Çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен бригадăсен „Голос комсомола" стена хаçачĕ тухса тăрать. Хаçат 10 кунта пĕрре тухать. Канна вăхăтра рабочисене хаçат-журнал вуласа парассипе уйрăм агитатăрсем ĕçлеççĕ.

Çĕр чавакансен бригадисем стахановла çирĕмкунлăхăн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче татах та пысăкрах ÿсĕм тăвассишĕн пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Комсомолецсем тимлĕн ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. Иснайкасси йалсоветне кĕрекен „Çĕсмер", „Большевик" колхозсем çирĕмкунлăха пысăк хастарлăхпа хутшăнса ĕçлеççĕ.

„Большевик" колхозри комсомол комитечĕ Ленинла-Сталинла комсомол çирĕм çул тултарнă уйава Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче хастарлă ĕçлесе, тивĕçлĕ парнесем хатĕрлессишĕн кĕрешет. Комсомолецсем чукунçул строителствинче стахановла çирĕмкунлăх пуçлансанах 10 çынтан бригада организацилесе ĕçлеме кайнă. Халĕ бригада ĕç нормине ытлашшипех тултарса пырать. Çак кунсенче тата 5 комсомолец ĕçлеме кайрĕç.

Гер. Героть.

„Правда" колхоз ĕç вăйĕ памаст

ТРАК. Тĕрер йалсоветне кĕрекен „Буйга" колхозран чукунçул синче стахановла çирĕмкунлăх *пуçланиччен кашни кунах 2 çын ыйавна 6 çын çуран ĕçленĕ. Стахановла çирĕмкунлăх пуçлансан* колхоз строителствăна тата 4 çын лашапа 5 çын çуран ĕçлеме йачĕ. Колхозниксем пурте тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çав хушăрах йалсоветне кĕрекен „Правда" колхоз пайанхи куна чукунçула çава [illegible] ĕç вăйĕ памасть.

Бор. Терентйăв.

Траксем йулса пыраççĕ

Трак районĕ кăçалхи çулхи вăрман хатĕрлев планне тултарассипе çав тери йапăх ĕçлесе пырать. Районĕпе кăçал 10.945 кубла метр хатĕрлемеле, 12.198 кубла метр турттармала пулсан, пĕтĕмпе те 3.020 кубла метр касса хатĕрлесе 2.512 кубла метр çеç турттарнă.

Партипе совет организацисем шăппăн, хускалмасăр ĕçлесси пайан кун та тăсăлса пырать. Райĕçтавком работникĕсем вырăна тухса çÿрес вырăнне, час-часах отношенисем çырсах иртерсе йараççĕ.

„Комбайн", „Синьялы", „Пятилетка" колхозсем кăçалхи çул вăрманта ĕçлеме пĕр çын та йаман. „Партизан" колхоз та 735 кубла метр касса хатĕрлес вырăнне 24 кубла метр çеç хатĕрленĕ. Çакăн пекех „Красный богатырь", „Красное Сормово" т. ыт. колхозсем вăрман хатĕрлев планне пурнăçлассипе йапах ĕçлесе пыраççĕ.

Районĕпе илсен çулталăк планне пĕр колхоз—Буденный йачĕпе тăракан колхоз çеç тултарнă. Вăл плана турттарассипе—160 процент, хатĕрлессипе—107 процент пурнăçланă. „Свобода" тата „Большевик" колхозсем те плана тултарассипатне çитнĕ (иккĕшĕ те 95 процент ытла тултарнă).

Халĕ енте уйран тырпула пуçтарса кĕртнĕ. Ĕç вăйĕ çителексĕр тесе ларма çук. Колхозсен бригадăсем организацилесе вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ памала. Райĕçтавкомăн ку тĕлĕшпе уйрăмăнах çирĕп руководствă, массăна организацилеме пĕлни кирлĕ.

А. К.

Електростанци строителствинче

ТРАК. Именкасси йалĕнчен пĕр çухрăмра шыв вăйĕпе ĕçлекен електростанци строителстви пырать. Пайанхи куна хăшпĕр обйектсем тăрăх ĕçе туса пĕтернĕ те енте. Çак кунсенче монтажниксем турбинăна вырнаçтараççĕ, електричествă кĕрекен 8 йала йупасем лартса тухаççĕ.

Строителствăра ĕçлекенсем станцăна октаберĕн 15-мĕшне ĕçе йарас тесе йулашки вăхăтра уйрăмăнах тимлĕн ĕçлеме пуçларĕç. Йе. Çтепанăвă, Ф. Кусмина, А. Семенăвă йулташсем кашни кун 3 кубла метр çĕр чавас вырăнне 4,5 кубла метр чаваççĕ. Платниксем: С. Федăрăв, М. Андрейĕв, Йа. Кротăв йулташсем те нормăна 130 процентшар тултараççĕ.

Строителствă ĕçĕ татах та ăнăçлă, хăвăртрах пулса пытăр тесен, ĕç вăйĕ çителĕклĕ кирлĕ. Анчах хальхи вăхăтра ĕç вăйĕ çитмест-ха. Ку тĕлĕшпе „Победа", „Малала" тата Молотăв йачĕпе тăракан колхозсем йапăх ĕçлеççĕ. Вăл колхозсен станцăна тунă çĕре 25—30 çынран кайа мар ĕç вăйĕ памала пулсан, 15—20 çын çеç панă. Кунсăр пуçне тата строителствă материалĕсем (проводсем, пĕренесем т. ыт. те) çителĕксĕр.

С. К.

Н. М. Рычков
ССРС Йустици халăх комиссарĕ

Судоустройствăн çĕнĕ саккунĕ

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствин тĕрекне çирĕплетме пулăшакан паллă саккунсем йышăнчĕ. Весен хушшинче кирлĕрен те кирлĕ саккунсенчен пĕри вăл—„ССРС, сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройстви çинчен йышăннă саккун". Судоустройствă çинчен йышăннă саккун социалисăмăн аслă çĕнтерĕвĕсене, унăн ирĕклĕ ĕçне, унăн савăнăçлă та телейлĕ пурнăçне сыхлама тунă совет сучĕн вырăнне тата кирлĕххе хальччен пулман çÿллĕше хăпартать.

Суд кашни государствăн çистемиччe пысăк вырăнта тăрать. Анчах совет сучĕ тата капиталисла çĕршывсен сучĕ хушшинче принциплă уйрăмлăх питех те пысăк вара.

Буржуази суда капиталиссемпе помещиксен интересне сыхлама, рабочисемпе хресченсене пусмăрлама тата експлоатацилеме тăвать. Буржуазлă çĕршывсенче судсене ĕççыннисене асаплантармала тунă. Çавăнпа та буржуазлă çĕршывсенче чылайĕшĕнче судйасене суйламасăрах лартаççĕ. Капиталисла çĕршывсенче судйа тата заседателĕ ĕçне тумашкăн буржуази представителĕсене çеç, урăхла каласан, капиталисла стройшăн тăрăшакан çынсене, рабочисемпе хресченсен тăшманĕсене çеç ирĕк параççĕ.

Патша Российĕнчи судсенче пĕ-ве, судсенче ĕççене пăхса тухмалли йĕркесене татăклăн та уççăн кăтартса парать.

Патша Российĕнчи судсенче пĕтĕмпех дворйансем, помещиксем, купцасем, експлоататăрла классен ытти представителĕсем пулнă. Патша сучĕсем, Ленин каланă пек, „укçа михĕн интересĕсене" сыхласа, рабочисемпе хресченсене хытă тыткаланă.

1917 çулти Октăберте рабочисемпе хресченсем помещиксемпе капиталиссен влаçне сирпĕтрĕç, çавăнпа пĕрлех патшан ылханлă судне те кăларса ывăтрĕç. Ĕççыннисем совет сучĕ турĕç. Ун умне Октăберти Социалисăмлă революци çĕнтерĕвĕсене пур тăшмансенчен те сыхлас, кивĕ йĕркесене кайала таварма тăрăшакансене пурне те хытă айăплас задачă лартнă. Çавăнпа пĕрлех совет сучĕн ĕççыннисене дисциплинă çине тата социалисăмлă ĕç çине çĕнĕлле пăхма вĕрентмеле.

Çак задачăсене совет сучĕ тивĕçлĕн пурнăçласа пырать, халăх ăна тивĕçлипе хисеплет. Пирĕн судăн вăйĕ халăхпа тÿрех çыхăнса тăнинче. Пирĕн çĕршывра правосудие халăх хăй суйласа лартнă судйасемпе халăх заседателĕсем урлă пурнăçа кĕртсе тăрать.

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ судоустройствă çинчен йышăннă саккун суд ĕçне вăйлатма, совет судне çирĕплетме тата хăлăхпа тачăрах çыхăнма май парать. Саккун совет сучĕн задачисене, суд оргăнĕсен тумалли ĕçĕсемпе вăйне ĕç йĕркисене, судсенче ĕççене пăхса тухмалли йĕркесене татăклăн та уççăн кăтартса парать.

Совет правосудин пирвайхи ĕçĕ—ССР Сойузĕн обществăлă тата государствăлă йĕркисене, хусăлăхăн социалисăмлă çистемине тата пирĕн стройăн таса никĕсĕ пулса тăракан социалисăмлă харпăрлăха пур тапăнусенчен те сыхласа тăрасси. ССРС-чи правосуди ССР Сойузĕн граждăнĕсен политика, ĕçлев, çуртйĕр тĕлĕшĕнчи, пурлăх тĕлĕшĕнчи тата ытти прависемпе интересĕсене, — ССРС Конституцийĕпе сойузлă тата автономлă республикăсен Конституцийĕсем гарантиленĕскерсене,— сыхлать.

Совет сучĕ пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыва ирсĕр сутăнчăксемпе предателсенчен — фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуазлă-националисла агенчĕсенчен сыхлать.

Совет правосудин хĕçĕ çĕршывăн ылханлă предателĕсен, сутăнçăсен, шпионсен, çынвĕлеренсен, социалисăмлă харпăрлăха çаратакансен тата халăхăн ытти тăшманĕсен пуçĕсем çине нимĕн шеллемесĕр анса ларса пынă, малашне те çавăн пекех анса ларса пырĕ. Совет сучĕ совет саккунĕсене тата социалисăмлă общежитин йĕркисене—çаратакансем, вăрăсем, хулигансем тата тĕрлĕ преступниксем пĕçсерен сыхласа тăма тивĕç.

Судоустройствă çинчен йышăннă саккун совет сучĕ социалисăмлă саккунлăха çирĕплетес, çынсен ăс-тăнĕнче капиталисăм йулашкийĕсене пĕтерес кĕрешÿре воспитани парас тĕлĕшпе паллă, пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать. Судоустройствă саккунĕн виççĕмĕш статйинче çапла каланă: совет сучĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçĕсемпе Совет Сойузĕн граждăнĕсене тăван çĕршыва тата социалисăм ĕçне йуратса хисеплемеле тăвас, совет саккунĕсене тĕрĕс, пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртес, социалисăмлă пурлăх çине тирпейлĕ пăхас, ĕç дисциплинине пăхăнас, государствă тата обществă умĕнчи тивĕçлĕхе тÿрĕ туса пырас, социалисăмлă общежити йĕркисене хисеплес йĕнĕпе вĕрентсе пырать,—тенĕ. Совет сучĕн çак задачисем çине Ленин тата Сталин хăйсен сăмахĕсенче пĕрре кăна мар кăтартса панă. Çак задачăсене пурнăçа кĕртсе пырса, совет сучĕ пирĕн тăван çĕршыва, унăн социалисăмлă стройне çирĕплетет.

Совет сучĕ йаланах тĕнчере чи демократилĕ суд пулнă. Пирĕн суд çистеми чи малтанхи вăхăтрах судйасене суйласа лартас тата вĕсем никама пăхăнмала мар, правосудине пурнăçа кĕртес ĕçе ĕççыннисене йышлăн хутшăнтарас принципсем çинче никĕсленсе тăнă. Судоустройствă саккунĕн 10-мĕш статйи: ССР Сойузĕнче судсене суйласа туса хураççĕ,—тесе палăртать. 9-мĕш статйа: ĕççене пур судсенче те, саккун йатарласа кăтартса панисĕр пуçне, халăх заседателĕсем пулнипе пăхса тухаççĕ,—тесе палăртать.

Суд учрежденисен çистемиччe халăх сучĕ питех те кирлĕ вырăнта тăрать. Суда пыракан ĕççенчен нумайĕшĕ халăх сучĕсем урлă тухаççĕ. Халăх сучĕ халăх интересне тĕкĕнекен тĕрлĕрен уголовнăй тата граждăнла ĕççене пăхса тухать.

Халăх сучĕсен çĕнĕ суйлав йĕрки вĕсене халăх патне тата ытларах çывхартать. Ку таркаччĕнхи саккун тăрăх халăх сучĕсене советсем пĕр çуллăха суйланă, халăх заседателĕсене çав срукăхах предприйатисемпе йалсенче суйланă.

Судоустройствă саккунĕн 22-ш статйи çапла йышăнать: „Халăх сучĕсене район граждăнĕсем пурне те тивĕç, тÿрех тата пĕртан суйлав правипе вăрттăн сасăласа виçĕ çуллăха суйласа лартаççĕ".

Совет сучĕн тарăн демократилĕхĕ тĕнчери чи демократилĕ Сталинла аслă Конституципе пĕтĕмпех килĕшÿлĕ пулса тăракан судоустройствă саккунĕн тата ытти статйисенче те палăрать. 29-мĕш статйа çапла йышăнать: „Халăх судйисем хăйсен ĕçĕсем çинчен тата халăх сучĕн ĕçĕсем çинчен суйлавçăсен умĕнче отчот тăваççĕ". Судйасене тата халăх заседателĕсене хăйсен ĕçĕнчен нимĕн та мар, суйлавçăсем çеç кайала чĕнсе илме пултараççĕ, йе вĕсене суд приговăрĕсем пулнă тăрăх кăларма пултараççĕ.

11-мĕш статйа: „Суйлав правипе усă куракан граждăнсем пурте судйа тата халăх заседателĕсем пулма пултараççĕ",—тесе калать. Сталинла Конституци тăрăх, ССР Сойузĕнче 18 çул тултарнă пур граждăнсене те,—мĕнле расăпа националлăс пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сăрен тухнине, пурлăх мĕнлине тата ăлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та, суйланма та права пур. Совет сучĕсенче пур çĕрте те, ĕçе уççăн туса иртерни государствă вăрттăнлăхне уçса пама пултаракан ĕçсемсĕр, йе тата ар ыйтăвĕпе çыхăнса тăракан преступленисемсĕр пуçне, пур ĕçсене те уççăн туса иртереççĕ. Судсенче ĕççене уççăн пăхса тухни—ĕççыннисене преступлени тунипе, çынсен ăс-тăнĕнчи капиталисăм йулашкисемпе кĕрешес, социалисăмлă харпăрлăха çирĕплетессишĕн кĕрешес ĕçе хутшăнтармалли вăйлă май пулса тăрать.

Буржуазлă-демократилĕ çĕршывсенче судсем ĕççене уççăн туса ирттермелине сăмахпа кăна йышăнаççĕ, анчах ĕçре, пурнăçра, тĕрлĕ майсемпе ĕççыннисене суд ларăвĕ пыракан залăна кĕмелле мар тăваççĕ. Фашисла çĕршывсенчи судсем пирки сăмах та пулма пултараимаст. Унта демократизмăн пĕчĕк палăрăмĕсене те пĕтернĕ, суд ĕçне уççăн туса ирттермелли принципа та пĕтерсе хунă. Фашисла суд хăйĕн ĕçне ĕççыннисенчен тĕплĕн пытарса тăрать.

ССР Сойузĕнче пур судсенче те суд ĕçне сойузлă йе автономлă республикăн йе автономлă облаçăн чĕлхипе туса тăраççĕ, вăл чĕлхене пĕлмен çынсене ĕç материалĕсемпе кусаракан урлă тĕплĕн паллаштармала тăваççĕ, çапăшкалах тата судра кашнине хăйĕн тăван чĕлхипе тухса калама права параççĕ. ССР Сойузĕнче суд умĕнче ответ тытма тивекен кашни

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра пăлхавçăсемпе интервентсен çарĕсем подкрепленисем илсе, çентаберĕн 18-мешĕнче Ебро йуханшывĕн районĕнче çĕнĕрен атакăсем туна. Фашиссен артиллерийĕпе авиаци йĕ икĕ кун хушши—çентаберĕн 18-мĕшпе 19 мĕшĕнче республиканĕçсен позицисем çине пĕр майах персе тăнă. Бомбăсем пăрахнă çĕре Италипе Германи 100 самолĕт ытла хутшăннă. Республиканецсем пăлхавçăсен пур атакисене те сирсе пăрахнă, фашиссене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр çыранĕ патĕнче Гуанциреп хĕвеланăç йенче (Цзӳцзйанран çурçĕр-хĕвеланăçнеле) йапонецсен наступленине сирсе пăрахнă. Фронтăн çав участкинче Йапони çарĕсене китайецсем хупăрласа илнĕ. Йапони командованийĕ хăйĕн çарĕсене уатан илсе кăларса, Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр çыранĕнче Усӳе патĕнче (Цзӳцзйанран хĕвеланăç йеннеле) антарнă Йапони колоннипе пĕрлештерме хăтланат. Китайецсем Усӳерен тухса кайса, вăл пунктран çурçĕр хĕвеланăç йеннеле çичĕ километрта оборонăн çĕнĕ линийĕсенче çирĕпленсе тăнă.

Икĕ кун хушши хыттăн вăрçнă хыççăн Китай çарĕсем çентаберĕн 18-мĕшĕнче Хуанчуаҥ хулинчен (Сиҥйанран хĕвелтухăç йеннеле) парахса тухса кайнă. Çентаберĕн 19-мĕшĕнче Китай çарĕсем Хаунчуаҥ патĕнче йапонецсене хирĕç калама çук хыттăн тарса вăрçнă.

Кăнтăр Китайра çентаберĕн 17-мĕшĕнче Йапони авиацийĕ Гуанси провинцинчи Лҗучжоу тата Учжоу хулисем çине бомбăсем пăрахнă. Учжоура вилнисемпе аманнисем 300 çын шутланаççĕ, 600 çурта ишĕлтерсе антарнă. Вут тивретсе йаракан бомбăсем пăрахнипе хулара пушар тухнă.

(ТАСС).

Румыни правитĕлствин оборонăлă ĕçĕсем

Тĕнчери лару-тăру питĕ те çивĕчленсе пынă май, Румынире чылай çĕнĕ ĕçсем туса иртерме палăртса икĕ декрет пичетлесе кăларнă. Пĕрремеш декретра вăрçă пулсан хĕрарăмсене мобилизаци тăвасси çинчен каланă (тылри службă валҗи тата çара пулăшма), иккĕмеш декретра — вăрçă пулсан çар нушисем валҗи йурахлă мĕн пур чĕртаварсене, çурмафабрикатсене тата хатĕр продукцине нацилĕ оборонă министерствин аллине парасси çинчен каланă.

(ТАСС).

Политикăна вĕренсе пыма

Клешкассинчи (Йĕпреç районĕ) вулав çурчĕн пуçлăхĕ С. Ухтаков йулташ лайăх ĕçлет. Вулав çуртĕ çумĕнче кулленхи политикăна вĕренсе пыма йагарласа кружок организациленĕ. Ку кружокра халĕ ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене вĕренеççĕ. Заҥатисене колхозниксем те, йединоличниксем те пысăк интереспа çӳреççĕ. Çессийышăннă саккунсене вĕреннĕ вăхăтра колхоза кĕрекенсен йышĕ ӳсме пуçларĕ: çак кунсенче 7 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Ухтаков йулташ хăйĕн пĕлĕвне ӳстерессипе те тăрăшать.

Г. М.

Газогенератăрлă автомобилсен чупăвĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: чупу участникĕсем. Сылтăмран: командорăн политикă йенĕпе ĕçлекен помошникĕ Н. Ф. Борешенкăв, машиностройени халăх комиссарĕ В. К. Лҗвов, чупу командорĕ А. А. Никонорăв, командорăн техникă йенĕпе ĕçлекен помошникĕ Ф. П. Фомин т. ыт. те.

Д. Фавилович фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Колхозниксен паттăрлăхĕ

Çак кунсенче Саҥкасси йалĕнче (Çĕрпӳ р.) вăйлă пушар пулнă. Вутра 25 кил, колхозниксен кĕлетĕнче пулнă 500 пăт колхоз тырри, темиçе пуç выҗăх тата М. Миронавă колхозницăн пилĕк çулхи ачи çунса кайнă.

Пушар вăхăтĕнче П. Трофимăв тата Т. Никифăрăв колхозниксем хăйсен паттăрлăхне кăтартса панă. Пушар вăхăтĕнче вĕсем колхоз пурлăхне сыхланă пулнă. Хăйсен кил-çурчĕсем çуннине курнă пулин те, вĕсем хурала пăрахса кайман, колхоз пурлăхĕ патне пырса ӳкекен кăварсене вĕсем шывпа сӳнтерсе тăнă.

Олимпиадăра мала тухнă

Çентаберĕн 17—18-мĕшĕнче Канашра, вакунсем йусакан савăт клубĕнче, Хусан чукунçулĕ çинче ĕçлекенсен илемлĕ пултарулăх олимпиади пулса иртнĕ.

Канашри вакунсем йусакан савăтри чăваш хорĕ (хора йертсе пыраканĕ А. Нечайĕв йулташ) олимпиадăра хăйĕн пултарулăхне аван кăтартса панă. Олимпиадăра вăл пĕрремĕш вырăна тухнă. Смотăр жӳрийĕ ăна кăçал октабĕр уйăхĕнче Мускавра пулса иртмелли чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри олимпиадăна кайма тивĕç панă. Кунсăр пуçне тата вакунсем йусакан савăтри чăваш хорне грамăтă, хора йертсе пыракан А. Нечайĕв йулташа 200 тенкĕ парса премиленĕ.

ÇАМРĂК ТАЛАНТСЕМ

Турхан районĕнчи Липăвкă йалĕнчи Иван Макарăвич Макарăвăн виçĕ хĕрача: Рейă 12 çулта, Лҗуци—10 çулта, Зойă—8 çулта. Вĕсем пурте шкула çӳреççĕ, отличнă вĕренеççĕ. Аслă хĕрачине, Рейăна отличницă пулнăшăн Крымри „Артек" йатлă пионерлагĕрне кайма путĕвкă парса премиленĕ, вăл çак кунсенче канма тухса кайрĕ.

Çакăнпа пĕрлех вĕсем музыкăна та лайăх вĕренеççĕ. Пурте балалайкăпа, мандолинăпа тата гитарăпа выҗама пĕлеççĕ, кашнийех çак виçĕ инструментпа та лайăх выҗаççĕ. Шкулти заҥатисенчен тухнă хыççăн хĕрачăсем виççĕшĕ пĕрлешсе репетици тăваççĕ, хăйсен ансамблĕне художĕствă йенчен тата ытларах ӳстереççĕ. Репертуарне пуйанлатаççĕ.

Вĕсен ансамблĕн репертуарĕнче—совет композитăрĕсем çырнă массăлă халăх йуррисем, çавăн пекех ташă кĕввисем те пур.

Л-в.

СУД

Суйа укçа тăвакан

Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн суд коллегийĕ çентаберĕн 17-мĕшĕнче Йĕпреç поçолăкне вырăна тухса, Анат Тимирчей йалĕнчи Аврам Петрович Петров гражданина Уголовнăй Кодексăн 59—8-мĕш тата 72-мĕш статйисемпе айăпламали ĕçе пăхса тухрĕ.

Петров судра хăйĕн айăпне йышăнчĕ. Айăпланакан Петров суйа укçасем туса государствăна улталаса пурăннă. 1937 çулти ийунĕн 6-мĕшĕнче вăл Йĕпреçри пивнойра 30 тенкĕлĕх икĕ хут укçа тата 5 тенкĕлĕх пĕр хут укçана государствă укçипе улăштарса илме хăтланнă. Анчах буфетчицă сисĕмлĕ пулнипе жулика çавăнтах тытнă.

Милици органĕсем ухтару тусан, Петров çумĕнче темĕнле Семен Иванăвич Макарăв гражданинăн паспăртне тупнă, Петров вăл паспăрта вăрланă пулнă, „Макарăв" вырăнне „Майорăв" тесе пăсса тӳрлетнĕ.

Суд Аврам Петрова 8 çул хушши тĕрмере хупса усрамала тата хăйне тивĕçлĕ пурлăхне конфискацилемеле пригăвăр йышăнчĕ.

МИХ. ЙЕМЕЛҖЙАНАВ.

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Çентаберĕн 20-мĕшĕнче Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăт ЗИС-101 маркăлă 4 пинĕмĕш автомашинă туса кăларнă.

●● Уфăран Мускава таврăннă чухне, Совет Сойузĕн Геройĕ Водопйанав йулташ Хусанта пулнă. Унта вăл партипе комсомолăн хулари активĕн пухăвĕнче Çурçĕр полҗусне çĕнтерсе илни çинчен доклад туса панă. Пухура 1500 çын пулнă.

●● Çентаберĕн 20 мĕшĕнче Архангĕлскра сывлăшран тата химилĕ тапăннине хирĕç оборонăн пĕрремĕш пысăк вĕренӳвĕ пуçланнă. Хула „хăрушă лару-тăру" тăрат. Вĕренӳсем пилĕк кун хушши пулаççĕ.

●● Çентаберĕн 18-мĕшĕнче Караганда облаçĕнчи чи лайăх 40 комбайнер тырăсене пуçтарас ĕçре пулăшма Сурçĕр-Казахстан облаçне тухса кайнă. Вĕсем хушшинче Акмолинск районĕнчи комбайнер-стахановĕц Петрович йулташ, „Сталинец" комбайнпа вăл 1000 гектар ытла тырă вырса пуçтарнă.

●● Донбасра, „Советскуголь" трестĕнче „Советская №-13 БИС" йатлă çĕнĕ шахтă стройа кĕнĕ. Çулталăкра вăл пĕр мĕлйун тонна çĕркăмрăкĕ памала.

** Çентаберĕн 10-мĕшĕнче Мускавра халăх переписне тунă çĕрте йертсе пыракан кадрсен курсĕ пĕтнĕ. Курсран 400 çын ытла вĕрентсе кăларнă.

(ТАСС).

ПĔЧĔК ФЕЛЙЕТОН

ШĂХЛИЧĔ

Илйинкăра канакансенчен чылайĕше:

— Пит те начар çын-çке çак Матвейĕв,—теççĕ, хăйсен йĕри-тавра йаланах уткаласа çӳрекен директăр çине пăхса.

— Начарах мар,—теççĕ теприсем.—Критиклес пулат ăна. Вара тӳрленме пултарат.

— Чăнах çапла-ши?

Критиклеме пуçлаççĕ. Директăр çинчен çтена хаçачĕ çине çыраççĕ. Вулаççĕ. Кулаççĕ. Директăр та вулат. Кулмаст. Умкăсйинчен шăхлич кăларат вăл. Кăларат те:

— Ши-и-и! шăхăртса йарат. Канакансем темĕнле тревогă пулĕ тесе канма пăрахсах директăр патне пуханаççĕ. Пăхаççĕ.

— Мĕн пулнă? Мĕн?!

— Кам çырнă ку хаçатри заметкăна?—ахăрса ыйтат директăр.

— Çекрет,—теççĕ ăна.— Калама йурамаст.

— Мĕнле çекрет пулма пултартăр! Кам хушнă ман çинчен çырма? Халех çурса пăрахăр!

Çурса пăрахмаççĕ.

— Хам çуратăп!—тет директăр.—Çитменнине тата прокурор канакан пӳлĕме кĕрсе жалăба паратăп.

Çурса пăрахат. Жалăбă пама кайат.

Çĕрле. 12 сехет. Пурте лăпланнă. Сывăраççĕ. Çуртсен йĕри-таврашĕнчи лапсăркка йăвăççен хушшинче çеç такамсем пăшăлтатаççĕ: сывăрма маннăскерсем пулас. Илйинкă йалĕнче автансем çунат çапса авăтни илтĕнет. Çурçĕр паçăрах иртнĕ.Пӳртри пĕрене хушăкĕнче шăрчăк чĕриклетет. Унчченте пулмаст, крылҗца çинче тапăртатнă сасă. „Вăрăсем килмерĕç ши",—тесе шутлат канакан, койкă çинче тĕлĕрсе выртнă май.

— Ши-и-и!— шăхăрат шăхличĕ. Темиçе хутчен шăхăрат вăл:—Ши-и!... Ши-и-и!...

Канакансем пурте, кĕпе-йĕм вĕççĕнех, крылҗца çине чупса тухаççĕ. Ыйтаççĕ;

— Мĕн пулнă? Мĕнле тревогă?!

— Сире мар,—тет шăхличĕ хуçи директăр.—Хуралçăсене йыхăратăп епĕ. Сывăрса кайман-ши, тетĕп. Пĕлетĕр вĕт, пострa тăнă чухне сисĕмлĕ пулас пулат.

Канакансем лăпланаççĕ. Пирускă мăкăрлантараççĕ те кĕрсе сывăраççĕ.

Ирхине. 10 сехет. Канакансем чей ĕçеççĕ. Ĕнерхи каçа мĕнле канаççăр иртерни çинчен пуплеççĕ. Унтан, пайан çеç килнĕ çĕнĕ çынсем çинчен:

— Мĕнле çынсем кусем?

— Вара çав. Ман вырăна ларнăха пĕри ав.

— Ч-ш-ш... Ан шавлăр,—тет тепри.—Директăр тăванĕсем вĕсем. Кăçал çу каçиччен кунта пурăнчĕç... Килеççĕ те канаççĕ. Канса йалăхнă хыççăн кайаççĕ. Каллех килеççĕ.

— Чăнах çапла-и? Мĕне пĕлтерет ку?!

— Ан шавла, хăй килет...

— Ши-и-и!—шăхăрат директăр.—Мĕн калаçатăр есĕр? Каллех ман çинчен-и? Аха,—мĕнле çынсем-ха кусем, тетĕр. Тĕленетĕр. Хамăр йалсем вĕсем. Паллашма пултаратăр. Ак çак вăл, саркăм çӳçли, пуçана ывăлĕ. Ун çумĕнче лараканни—кукка ачи. Тепри ав, йаланах кулса тăракан куçсемли, хуҥакамăн хĕрĕ пулат: йепле ӳссе кайнă вăл, хам салтака кайнă чухне сапкара çеç йулчĕ. Тепри ав, унăн тантăшĕ. Йалан пĕрле çӳреççĕ. Кунта та пĕрле килнĕ. Тепри ав...

— Ан кала малала,—пӳлчĕ ăна пĕр канакан.—Ех, Самсон Матвей... Матвейч! Мĕнле-ха директăр ес? Кам сана çак ĕçе шанса панă?

Вир Мĕтри.

Шкулти духовой оркестр

Кĕçĕн Кипечри (Шăхасан р.) вăтам шкулта вĕренекенсемпе преподавателсем шкул валҗи духовой оркестр комплекчĕ туйанма шутланă. Çак тĕлĕшпе вĕсем иртнĕ çулта 150 пăт майăр пуххса сутнă, майăр укçинчен оркестр туйанмă çĕре уйăрса панă. Çавăн пекех шкул дирекцийĕ те пулăшнă. Анчах доховой оркестр комплекчĕсене тупма йăвăр пулнă.

Çавăнпа та кăçал вĕсем хăйсен депутачĕ патне—ССРС Верховнăй Совечĕн Канаш суйлав округĕнчен суйланă депутат Горкин йулташ патне çыру çырнă, çав çырура вĕренекенсем депутатран шкул валҗи духовой оркестр комплекчĕ туйанма пулăшу пама ыйтнă. Горкин йулташ ответлă çырура çак ĕçре пулăшма сăмах панă.

Çентаберĕн 17-мĕшĕнче Горкин йулташ хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртнĕ. Кĕçĕн Кипечри вăтам шкул валҗи депутат 4.503 тенкĕ те 55 пус тăракан духовой оркестр комплекчĕ йарса панă. Унта çакăн пек инструментсем пур: трубасемпе корнетсем—5, алҗт—2, тенăр—2, баритон—1, бас—2, кларнет—1, пысăк тата пĕчĕк барабансем, тарелкăсем тата кларнет валҗи 10 штук чĕлĕх.

Пысăк концерт

Чăваш государствă филармонийĕпе халăх пултарулăх çурчĕ çентаберĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарти стройкăра ĕçлекен рабочисем валҗи пысăк концерт организацилерĕç. Концерта профессионаллă тата харпăрхăй пултарулăх искусствин чи лайăх работникĕсем хутшăнчĕç. Унта государствăн духовой оркестрĕ, цирк бригади, пĕччен исполнителсем—йурăçсем, вулавçăсем т. ыт. пулчĕç.

Хăй тĕллĕн вĕреннĕ йурăçă Белҗаковă йулташ („Швейстрочсойуз" работници) выступленине уйрăмах палăртмала. Талантлă гармонист Шкода йулташăн (Шупашкар хулинчи 1-мĕш пушар командин работникĕ) икĕ ретлĕ венски гармоҥ çеммипе Белҗаковă „Жигули", „Страданье", „Колхозные частушки" йурăсене маçтăр йурласа пачĕ.

Цирк бригади тухса выҗани ăнăçлă пулчĕ, бригадăна Зверев й. йертсе пычĕ. Оринский—жонглҗор тата иллҗузи турĕ, Валҗдемар—дрессировкă тунă йытăпа тата упапа выҗăрĕ.

Государствă филармонин духовой оркестрĕ тĕрлĕрен кинофилҗмсенчен совет композитăрĕсем çырнă массăлă йурăсене выҗăрĕ, сăмахран, „Цирк" филҗмран И. Дунайевский „Песня о родине", „Двадцатый май" филҗмран Дан. тата Дм. Покрассем çырнă „Москва", Л. Книпперĕн „Полюшко-поле" йурăсене т. ыт. маçтăр выҗăрĕ.

Концерт пысăк ăнăçлăхпа иртрĕ.

Ф. ЛАНДЫШЕВ.

Пулни-иртнисем

○ Муркашри (Тутаркас р.) Владимир Гаврилăв Шупашкара пырса чылай вăхăт ĕçлемесĕр пурăннă.

Вăл нумай пулмаст Шупашкарта пурăнакан Скворцов хушаматлă çынăн ĕнине вăрласа килсе, Шашкар пристанĕнче ĕçлекен Федăр Цыпкин патне пусма хупнă пулнă. Анчах та милици çак вăрă-хурахсене вăхăтра тытса арĕсленĕ. Ĕнине хуçине тавăрса панă.

○ М. Н. Зайцĕвă чылай вăхăт хушши ниçта ĕçлемесĕр тĕлли-паллисĕр çапкаланса çӳресе, вăрă ĕçĕпе пурăннă. Кăçалхи майăн 14-мĕшĕнче вăл Шупашкарта пурăнакан (Ленинскайа, 29) А. И. Нипадистăвă хватерĕнчен 100 тенкĕ укçа, 700 тенкĕлĕх облигаци тата кĕпе вăрласа кайнă. Çакăн хыççăн вăл тарса çӳренĕ, Çентаберĕн 14-мĕшĕнче ăна Шупашкарта тытса арĕсленĕ.

Судоустройствăн çĕнĕ саккунĕ

(ЙУЛАШКИ)

гражданин судра хăйĕн тăван чĕлхипе калаçма пултарат, куçаракана усă курма пултарат, защитник тытма пултарат, хăйне хăй хӳтĕлеме пултарат. Судра тухса калакан çынсене çавăн пек гарантисем пани вихăш буржуалă çĕршывра та çук, пулма та пултараймаст.

Судоустройствăн çĕнĕ саккунĕ совет судне малала демократизацилесе пырат, суда халăх патне тата ытларах çывхартат, ĕçе тĕрĕс пăхса тухма тата пысăкрах гарантисем туса парат. Çав вăхăтрах çĕнĕ саккун кашни суд—халăх сучĕ, край, облаç, округ сучĕ тата автономлă облаç сучĕ, автономлă республик, сойузлă республик тата ССР Сойузĕн Верховнăй сучĕсем мĕнле ĕçсене пăхса тухмалине тăтăклăн та уççăн кăтартса парат. Çак судсемсĕр пуçне, саккун ССР Сойузĕнче йатарласа тунă судсем—çар трибуналĕсем, чукунçул транспăртĕнчи линейнăй судсем, шывçул транспăртĕнчи линейнăй судсем тумалине палăртат. Çар трибуналĕсене çарти преступленисене тата çавăн пекех саккунпа пăхнă тăрăх вăл хисепе кĕрекен преступленисене пăхса тухма тунă. Чукунçул тата шывçул транспăртĕнчи линейнăй судсене ĕç дисциплинине пăсас тĕлĕшпе тунă преступленисене, çĕршывăн хуçалăх пурнăçĕнче тата оборонă тĕлĕшĕнчен пит те пысăк вырăн йышăнса тăракан транспăртăн йĕркелĕ ĕçне пăсса тунă преступленисене пăхса тухма тунă.

ССР Сойузĕнче судăн чи аслă органĕ—ССРС Верховнăй Сучĕ пулса тăрат, ăна ССРС Верховнăй Совечĕ пилĕк çуллăха суйлат. ССРС Верховнăй Сучĕ — Совет Сойузĕн тата Сойузлă республикăсенчи суд органĕсен суд ĕçĕсене надзор туса тăмала ССРС Верховнăй Сучĕ уголовнăй тата гражданла пысăк ĕçсене пăхса тухат, çавăн пекех тата кĕçĕнрех судсем пăхса тухнă ĕçсем пирки, саккуна кĕнĕ пригăварсемпе решенисем пирки панă жалăбăсемпе протессене пăхса тухат.

Судоустройствăн çĕнĕ саккунĕ судсен ĕçĕнчи организацине йĕркелехре чылай паллă улшăнусем кĕртрĕ, суд ĕçĕнчи нумай инстанцисем пулнине пĕтерчĕ. Нумай инстанцисем пулни практикăла ĕçре волокитăпа бӳрократисăм патне, ĕçсене пăхса тухассине вăраха йарасси патне илсе пынă.

Судоустройствă çинчен йышăннă çĕнĕ саккун совет судне Сталинла Конституци лартнă задачăсен çӳлĕшне çĕклет, социалисăмлă саккунлăха çирĕплетет, Совет Сойузĕнче кăна чăн-чăн халăх сучĕ, чăн-чăн демократилĕ суд пулма пултарнине пĕтĕм тĕнчери ĕççынисене кăтартат.

Судоустройствă çинчен йышăннă саккун совет судне Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешес, совет халăхĕн телейĕшĕн кĕрешес ĕçре хăйĕн ĕçне тĕрĕс туса пыма пур кирлĕ условисене те туса парат.

Турăсăрсен, Чăваш Совечĕн иккĕмĕш пленумĕ

Çентаберĕн 17—18-мĕшĕсенче, Шупашкарта, Вăрçăлă Турăсăрсен Чăваш Совечĕн иккĕмĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра Вăрçăлă Турăсăрсен нацилĕ республикăсенчи Совечĕсен представителĕсен Мускавра пулса иртнĕ канашлăвĕ йышăннă решени çинчен Чăваш Совет председателĕ Аникин йулташ докладне итлерĕç.

Троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла тăшмансем тĕне хирĕç кĕрешес ĕçре те сийен туса пынă. Пленумра тухса каланă йулташсем çавăн çине кăтартса, Вăрçăлă Турăсăрсен Чăваш Совечĕ халăх тăшманĕсем тунă сăтăрлăхан йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Чăваш Совет руководствинче çирĕп дисциплинă пулман. Аникин сӳс-кантăр хатĕрлев кантурĕнче ĕçленĕ. Вăл телефон тăрăх калаçнипе, Чăваш Советне хутран-ситрен кĕрсе тухнипе „йертсе" пырат.

Чăваш Тĕп музейĕнче турăсăрсен пайĕ пулнă. Буржуалă-националисла сăтăрçăсем çак пайа пĕтерсе хунă. Вăрçăлă Турăсăрсен Чăваш республикĕнчи сйесĕнче ку пайа çĕнĕрен уçма хушнине халĕ те пурнăçламан. Аппаратра шанчăксăр çынсем ĕçлеççĕ. Мартăн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ сйесра Чăваш Совет инструктăрне Тимофейева ĕçрен кăларма хушнăччĕ. Ăна халĕ те аппаратра тытса усраççĕ.

Пленумра Улатăр, Канаш тата Куславкка райсовечĕсен ĕçĕсем çинчен отчот итлерĕç. Çак промышлĕннăçлă районсенче те турăсăрсен йачейкисен ĕçне, тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартманни курăнчĕ. Канашри вакунсем йусакан савăтра турăсăрсен йачейкине пушар деповĕ çумĕнче çеç организациленĕ, ытти рабочисем хушшинче йачейкăсем çук. Куславкка районĕнче пухăннă член укçине урăх çĕре расхутласа пĕтернисем пулнă.

Профсойуз организацисем тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе туса пымаççĕ. Çакна пула ĕнтĕ хапрăк-савăтсемпе учрежденисенче, шкулсенче турăсăрсен йачейкисем йапăх ĕçлеççĕ. Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те тĕне хирĕç кĕрешес йенĕпе шкулсемпе вулав çурчĕсене кăтарту та пулăш парса тăмаст. Ку ĕнтĕ çакăнтан та лайăх курăнат: профсойуз обкомĕсемпе ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн представителĕсем пленумра та пулмарĕç.

Г. Закамский.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Гидроузелĕн Шупашкарти Инженерла-Геологилĕ Партийĕ

КОЛЛЕКТĂРСЕМ-ГЕОЛĂГСЕМ ХАТĔРЛЕКЕН

ВИÇĔ УЙĂХЛĂХ КУРСА

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Курса 18 çулхисене тата асларахисене, тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Курса вĕренме илнисене уйăхне вĕренӳре ĕлкĕрсе пынă тăрăх 125 тенкĕрен пуçласа 200 тенкĕ таран стипенди параççĕ.

Заявленийĕ тата вĕренни çинчен, сывлăх мĕнли çинчен документсене çак адрĕспе йамала:

Г. Чебоксары, ул. Кадыкова, дом № 6-2, телефон 7—47 тата 7—44.

3—1

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подписка сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 452 13 Гор. Чебоксары, типографи № 1 заказ № 711, ф. 6. 58×84 в. в.